Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУНЬ 15 ЙУНКУН 135 (4948) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67. Ред. заместителĕн 0—88. Редакци секретарĕн 4—40. Дежурнăйăн 6—23

Пĕтĕм ĕç суйлав кампанине пăхăнмала

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Грузипе Армени халăхĕсем хăйсен Верховнăй Совечĕсене депутатсем суйларĕç. Тата тепĕр вунпĕр кунтан РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ пулат. Суйлав кунне таччăнах çитсе тăтăмăр.

Чăваш халăхĕ, РСФСР территорине кĕрекен пĕтĕм халăхсемпе пĕрле, суйлава хуçалăхпа культура строительстви фрончĕсенче çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем туса хатĕрленет. Халăх хушшинче производствăлă хускану нихçанхинчен те пысăк. Халăх хăй Ленин—Сталин партине, унăн çулпуçне—Сталин йулташа чĕререн йуратнине, коммуниссен-большевиксен партин политикине йышăннине кăтартма пĕтĕм чĕререн тăрăшат. Пĕтĕм халăх коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн тăрат. Çакăн çинчен калаççĕ пулса иртнĕ суйлав умĕнхи пухусем, канашлусем, çакăн çинчен калаççĕ суйлав умĕнхи митингсем, депутата суйлама тăратнă кандидатсем суйлавçăсемпе тĕл пулнисем. Суйлав округĕсенче, участкăсенче темĕн чухлĕ довереннăйсем, агитатăрсем ĕçлеççĕ, вĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн агитацилеççĕ, парти шухăшне массă патне илсе пыраççĕ. Парторганизацисем суйлава хатĕрленес ĕçре пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме чи лайăх вăйла уйăрса панă. Довереннăйсем те, агитатăрсем те хăйсен ĕçĕсене начарах тумаççĕ. Аслă Арапусĕнчи 82-мĕш суйлав округне кĕрекен Тутар Шурутĕнчи суйлав участкинче 274 суйлавçă. Вĕсем хушшинче йалти чи лайăх учительсем, комсомолецсем тата колхоз активĕ ĕçлет. Апанайĕв, Гельманăв, Халимова, Таветдинова, Салахова агитатăрсем суйлавçăсем хушшинче 12—13-шер тĕрлĕрен калаçусем, заньятисем иртернĕ. Вĕсем суйлавçăсем хушшинче калаçусем иртерме йаланах тĕплĕн хатĕрленеççĕ, парти шанса хунă ĕçе тĕплĕн тума тăрăшаççĕ. Вĕсем суйлавçăсене кружоксене пухса калаçнипе çеç чарăнмаççĕ, тата суйлавçăсен килĕсене çÿреççĕ, колхозниксемпе пĕрле çĕре хире тухаççĕ, канна вăхăтра, урама халăх пухăнса ларакан вырăнсенче пулаççĕ.

Кунта суйлав участкин çуртне те лайăх йĕркеленĕ. Кабинессем хатĕр, çутă та илемлĕ. Чÿречесем çинче чечексем, занавескăсем, сĕтелсене хĕрлĕ пусмапа витсе хунă. Унтах чернилне те, ручкине, каранташне те—типтемели хут таранах хатĕрлесе хунă. Лампăсене тасатса, краççын тултарса хунă. Суйлав йешĕкĕ, ăна пичетлесе хума сăркăчпа шпагат та, хатĕр.

Суйлав комиççи вырнаçакан пÿлĕме те илемлетнĕ. Стенисем çинче кускĕсем, сехет, плакатсем, çулпуçĕсен сăнĕсем.

Суйлавçăсем те саслама йĕркене лайăх пĕлеççĕ.

Паллах, суйлавçăсем сасăламали йĕркене вĕренинех лăпланмаççĕ. Тата вĕсем суйлава производствăла çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Майăн 30-мĕшнех 411 гектар çинче çумкурăкĕсене малтанхи хут çумласа тухнă, çĕртме сухи туса пĕтернĕ, халĕ хĕрсех çулйĕр строительствинче ĕçлеççĕ. 60 хĕрарăм, икĕ сменăпа, çитĕннисен шкулĕнче вĕренет. 15 çын вĕрентсе кăларнă, çак кунсенче тата 25 çын вĕренсе тухмала.

Çакăн пек лайăх ĕç çинчен калакан примерсене тата та нумай илсе кăтартма пулат. Анчах лайăх примерсем тăрăх епĕр суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе пурне те туса çитертĕмĕр теме пултараймастпăр-ха. Чылай организацилĕ-техникăлă ĕçсене туса çитермен, суйлав участкисенче çаплах политикăлă-массăлă ĕçсем начар тăраççĕ. Çакăн çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине килекен çырусем калаççĕ. Шăмăршă районĕнчи Виçпÿрт суйлав участкинех илер. Кунта суйлав Положенисене вĕренме организациленĕ кружоксем те йĕркелĕ ĕçлемен. Агитгруппа руководителĕ Тихăнăв йулташ суйлавçăсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе чăннипе организацилес вырăнне, Патăрйел суйлав округ комиççине тĕрĕс мар сведенисем парса улталас çул çине тăнă. Вăл: Виçпÿрт суйлав участкинче йăлантару ĕçĕ аван пырат. Агитатăрсенчен уйрăмах—Матвейĕв, Куприйанăв, Алексейĕв лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем майăн 1-мĕшĕнчен ийунĕн 1-мĕшчен 7-шер заньяти туса иртернĕ" тет. Çав вăхăтрах, Тихăнăв асăнакан агитатăрсем пурĕ те 3 заньяти кăна иртернĕ.

Çакăнтах 4 учитлĕ хут пĕлмен суйлавçăсене вĕрентме март уйăхĕнчех уйăрнă пулнă. Вĕсем пайанхи куна çитсе те хăйсен ĕçне тытăнман. Шишкина учительница та, хăй нимĕн те туманнине витсе хурас шутпа, мана çирĕплетсе панă хĕрарăмсем хут вĕренме пултараймаççĕ, тесе сÿпĕлтетсе çÿрет.

Суйлавçăсен спискинче питех те нумай йăнăшсем туса пĕтернĕ. Вăл йăнăшсене таксанах палăртнă пулсан та тÿрлетме тытăнман.

Кабинăсем хатĕр мар. Суйлав участкин комиççи председателĕ участкă çуртне пырса та курман.

Тутар Шурутпа Виçпÿрт суйлав участкисем хушшинче мĕн пек пысăк уйăрăмлăх! Паллах, Шăмăршă райкомĕ суйлав кампанине большевикла йĕртсе пырас пулсан, Виçпÿрт участки те Тутар Шурут участкинчен кайа пулмала мар.

Суйлава хатĕрленес ĕç уйрăмах Тутаркас районĕнче начар пырат. Ун çинчен епĕр „Чăваш Коммунĕнче" çыртăмăр. Анчах унта халĕ те ĕçсем йĕркене кĕрсе çитеймен-ха. Тутаркас районĕнчи партипе совет руководителĕсем Ленин—Сталин парти ĕçĕнче кĕрешсе çитĕннĕ çынсене тупма пĕлмен чирпе чирлеççĕ пулас. Унсăрăн çакăн пек тĕлĕнтермĕш пулман пулĕччĕ. Акă Квасков А. Н. пĕр вăхăтрах икĕ комиççире тăрат: РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар округ суйлав комиççи членĕ, вăлах—Калайкас участкă суйлав комиççи членĕ. Çавăн пекех Константинова Ф. К. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Мăн-Сĕнтĕр округ суйлав комиççи председателĕн заместителĕ, вăлах—Каршлăхри участкă суйлав комиççи председателĕ, Йăтмасăв П. С. Турай округ суйлав комиççи членĕ, вăлах Нис-касси участкă суйлав комиççи председателĕн заместителĕ. Çак йулташсем икĕ çĕре те ĕлкĕрме пултарасси пире питех те иккĕлентерет. Тĕрĕсрех каласан, вĕсем округри комиççисенче те пусăрăнса ĕçлеймеççĕ, участкăри комиççире те пулма ĕлкĕреймеççĕ. Организацилĕ-техникăлă ĕçсене хăйсене уйрăман илме йурамаст. Вĕсене тĕплĕн туса çитерниччен, ĕçĕн ăнăçлăхĕ, суйлаври çĕнтерÿ килет.

Тăшмансем пирĕн ĕçри çитменлĕхсемпе усă курса пирĕн ĕçе чăрмантарма тăрăшаççĕ. Политикăлă-массăлă ĕçе лайăх организацилеснипе, организацилĕ-техникăлă ĕçсене тĕплĕн туса çитернипе тăшмансен ирсĕр ĕçĕсене çапса салатăр.

Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм организацисен: парти, совет, комсомол, профсойуз, т. ыт. пĕтĕм обшчествăлă организацисемпе ĕççыннисен обшчествисен ĕçĕ пĕр задача—суйлава лайăх иртерес, суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтермеле тăвас задача пăхăнмала.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсоветра

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çистеми тăрăх комбайнсене йусас ĕç мĕнле пынине пăхса тухнă.

Каçалхи çул уйхирти тырпулсене пухса кĕрес кампанин уйрăмлăхĕ çакăнта пулат: çуракине иртерех пĕтернĕ май, пуринчен ытла хĕвелтухăçри районсенче, уйхирти тырпулсене пухса кĕрес ĕç ытти чухнехи срукенчен маларах пуçланмала.

Çапла пулин те, ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, республикăсенчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕсем, крайсемпе облаçсенчи ĕçтăвкомсем тата крайсемпе облаçсенчи çĕрĕç органĕсем начар йертсе пынипе, комбайнсене йусас плана пачах çителĕксĕр тултарса пыраççĕ. Пĕтĕм Сойуз тăрăх çак çулхи ийунĕн 5-мĕшне комбайнсене йусас плана 45 процент кăна тултарнă.

Сойузри кăнтăр йенчи районсем те, вĕсем уйхирти тырпулсене пухса кĕрес ĕçе ийунь уйăхĕ вĕçĕнче тытăнмала, комбайнсене йусаса пĕтермен (Орджоникидзе крайĕ тăрăх ийунĕн 5-мĕш тĕлне 69 процент кăна йусанă, Ростов облаçĕ тăрăх 75 процент йусанă, Николайĕвск облаçĕ тăрăх—80 процент).

Комбайнсем йусас ĕç хĕвелтухăçри районсенче те çителĕксĕр пулса пырат. Сăмахран, Омск тата Челябинск облаçĕсем паркри мĕн пур комбайнсен хисепĕнчен 9 процентне çеç йусанă, Новосибирск облаçĕ—15 процент, Иркутск облаçĕ вара комбайнсем йусас ĕçе тытăнман та.

Економсовет ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, республикăсенчи çĕрĕç халăх комиссариачĕсене, крайсемпе облаçсенчи çĕрĕç органĕсен начальникĕсене хирти тырпулсене пухса кĕрес ĕç пуçланиччен 1938 çулта çав ĕçре ĕçлемели комбайнсене пурнĕ те йусаса пĕтерме хушнă, çакăнпа пĕрлех Економсовет ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн МТС-пе совхозĕсем тăрăх комбайнсем йусас плана ÿстермеле тунă—уйхирти тырпулсене пухса кĕме тухаччен 15 пин комбайн йусас вырăнне 23 пин штук йусамала тунă. (ТАСС).

Украинă К(б) Партин XIV-мĕш сйесĕ уçăлнă

Ийунĕн 14-мĕшĕнче, Кийĕвра, Украинă К(б) Партин XIV-мĕш сйесĕ уçăлнă. Сйес калама çук пысăк çĕкленÿпе уçăлнă.

Сйеса Украинă К(б)П Тĕпкомĕн секретарĕн ĕçĕсене туса пыракан Хрущов йулташ уçнă.

Сйеса уçнă чухне каланă сăмахĕнче вăл:—Украинăри парторганизацисем хăйсен XIV-мĕш сйесне ПСК(б) Партин Ленинла—Сталинла Тĕпкомĕ тавра тата аслă Сталин тавра нихçанхинчен ытла çирĕппĕн пĕтĕçсе тăнипе кĕтсе илчĕç,—тесе палăртат.

Украинăра тăшмансене ăнăçлăн çĕмĕрсе тăкни вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ хăй çав ĕçре пире тÿррĕмĕн пулăшнин результачĕ пулса тăрат, çавна пирĕн пĕлмеле,—тесе каланă Хрущов йулташ. (Тăвăллăн нумайччен алă çупаççĕ).

Епĕр хăйуллăнах калама пултаратпăр: Украинă большевикĕсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн кирек мĕнле заданине те, Сталин йулташăн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр. (Тăвăллăн оваци тăваççĕ, Сталин йулташа чыслаçа саламла сăмахсем кăшкăраççĕ)

Сйес президиумне çак йулташсене суйланă: Хрущов, Бурмистенко, Коротченко, Успенский, Тимошенко, Касаурăв („Донбасуголь" начальникĕ), Дуканăв, Кривонос тата ыт. те—пурĕ 27 çын.

Хисеплĕ президиума Сталин, Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Андрейĕв, Ждановăв, Йежов, Чубарь, Хрущов йулташсене тата Димитров, Тельман тата Хозе Диас йулташсене суйласа делегатсем тăвăллăн алă çупаççĕ, саламлă сăмахсем калаçа кăшкăраççĕ.

Тăвăллăн, нумайччен оваци туса Украинă К(б) Партин XIV-мĕш сйесĕн хисеплĕ председателне халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа суйланă.

Сйес çакăн пек кун йĕрки çирĕплетнĕ: Украинă К(б)П Тĕпкомĕн отчочĕ, ревизи комиççин отчочĕ, Украинă К(б)П Тĕпкомне суйласси, ревизи комиççине суйласси. Украинă К(б) Парти Тĕп Комитечĕн ĕçĕсем çинчен отчотлă доклад Н. С. Хрущов йулташ туса панă, делегатсем ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

ДА ЗДРАВСТВУЕТ ВСЕСОЮЗНАЯ КОММУНИСТИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ БОЛЬШЕВИКОВ—ПЕРЕДОВОЙ ОТРЯД ТРУДЯЩИХСЯ СССР!

ВСТРЕТИМ ВЫБОРЫ В ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ РСФСР НОВЫМ ПОДЪЕМОМ СТАХАНОВСКОГО ДВИЖЕНИЯ!

В. Стенберг художник ÿкернĕ плакат. ИЗОГИЗ кăларнă. (Сойузфото).

Партин Ленинград облаçĕнчи организацин VII-мĕш конференцинче

ЛЕНИНГРАД, ийунĕн 13-мĕшĕ (ТАСС). Партин Ленинград облаçĕнчи организацин конференцийĕ ПСК(б)П Обкомĕпе ревизи комиççин отчотлă доклачĕсене тăватă кун хушши сÿтсе-йавнă.

Отчотлă докладсем тăрăх пренисенче пурĕ 61 çын тухса каланă.

Ийунĕн 13-мĕшĕнчи каçхи ларура йулашки сăмах А. А. Жданăв йулташ тухса каланă, конференци ăна тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Конференци пурте пĕр шухăшлă пулса çакăн пек постановлени йышăннă: ПСК(б)П Ленинград Облаç Комитечĕн политикăлă çулйĕрне тĕрĕс, практикăлă ĕçне—çителĕклĕ, тесе йышăнас, ревизи комиççин докладне çирĕплетес, тенĕ.

(ТАСС).

ПСК(б)П Ростов обкомĕн пленумĕ

ДОН çи РОСТОВ, ийунĕн 13-мĕшĕ (ТАСС). ПСК(б)П Ростов обкомĕн пленумĕ пулса иртнĕ. ПСК(б)П Ростов Обкомĕн пĕрремĕш секретарне Б. А. Двинский йулташа суйланă.

529 пин тенкĕ выльав укçи тÿленĕ

Каçал Чăваш республикĕнче йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ийунĕн 10-мĕшне çитиччен государства займĕсем тăрăх 529 пин тенкĕ выльав укçи тÿленĕ. Вăл шутран çак йулашки уйăх хушшинче (майăн 10-мĕшĕнчен ийунĕн 10-мĕшне çитиччен) 116 пин тенкĕ тÿленĕ.

Партин Мускав облаçĕнчи организацин VI-мĕш конференцинче

Ийунĕн 13-мĕшĕнче, партин Мускав облаçĕнчи организацин VI-мĕш конференцинче ПСК(б)П Мускав Комитечĕпе ревизи комиççин отчотлă доклачĕсем тăрăх пренисем пĕтнĕ. Пренисенче пурĕ 61 çын тухса каланă. Мускав Комитечĕн отчотлă доклачĕ тăрăх йулашки сăмах А. И. Угарăв йулташ тухса каланă, делегатсем ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Конференци пурте пĕр шухăшлă пулса ПСК(б)П Мускав Комитечĕн политикăлă çулйĕрĕ тĕрĕс, практикăлă ĕçĕ çителĕклĕ, тесе йышăннă. Çавăн пекех ревизи комиççин отчотне те пурте пĕр шухăшлă пулса çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Чехословакири муниципалитет суйлавĕсен виççĕмĕш турĕн итогĕсем

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Чехословакире муниципалитет суйлавĕсен виççĕмĕш (йулашки) турĕ пулса иртнĕ. Муниципалитетсене (муниципалитетсем—вĕсем вырăнти тытăм органĕсем пулаççĕ) 8.291 çĕрте çĕнĕрен суйлама палăртнă пулнă, суйлавсем 3.829 пунктра çеç пулса иртнĕ. Ытти пунктсенче политикăлă партисем пуриншĕн те килĕшÿлĕ пĕр кандидат тăратас тĕлĕшпе каласса татăлнă (çакăн пек чухне муниципалитетсене спискăсем тăрăх, суйлавсемсĕрех, тăваççĕ).

Муниципалитет суйлавĕсен виççĕмĕш турĕ халăхсен сарлака массисем фашисăма хирĕç кĕрешекен партисене шанни ÿссе пынине çĕнĕрен кăтартса панă. Чех халăхĕ ытларах пурăнакан районсенче йышлă сасăсене чех социалисĕсемпе коммунисĕсем илнĕ. Чи пысăк 40 пунктсенче коммунисла парти 33.481 сасă илнĕ, 1935 çулта пулса иртнĕ парламент суйлавĕсенче 28.394 сасă илнĕ пулнă (çапла вара ÿсĕм 15,5 процент шутланат). Чехсем пурăнакан районсенче чи сахал сасăсем фашисла ушкăнсем илнĕ.

Кунсăр пуçне, словаки районĕсенче демократилĕ партисен тайăмĕ вăйланса пыни тата фашисла группировкăсем, пуринчен ытла Польшăпа Германи фашисăмĕн агентури—словакири автономиссен партийĕ (Глинки) арканса пыни палăрат. Çак парти суйлавсем умĕн ун майлă словаки халăхĕн ытларахăш пайĕ тăрĕ, тесе мухтаннă. Словакири автономиссем арканса пынине уççăн кăтартаканни вăл Братислав хулинчи (Словакин тĕп хули) суйлавсен итогĕсем пулса тăраççĕ. Демократилĕ партисем (чех социалисĕсем, социал-демократсем тата урăххисем те) кунта 19 мандат илнĕ, коммуниссем—икĕ мандат, нимĕç социал-демократĕсем—пĕр мандат, Глинки партийĕ—мĕн пурĕ те ултă мандат çеç илнĕ.

Судет облаçĕнчи районсенче, генлейнăвецсем суйлав умĕн хăйсен террорла ĕçне хыттăн туса пынă пулин те, вĕсемшĕн панă сасăсен мĕн пур хисепĕнчен 70 процентран ытла мар шутланат. Судет облаçĕнче пур çĕрте те тенĕ пекех фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем хăйсен позицисене сыхласа хăварма пултарнă, вĕсем панă сасăсен мĕн пур хисепĕнчен 25-рен пуçласа 35 процента çити илнĕ.

Чехословакири муниципалитет суйлавĕсен итогĕсене хак парса, Франци пичечĕ çапла паллă туса çырат: Чехословакири гитлĕрăвецсем, вĕсем суйлавсем умĕн террорла ĕçе тĕлĕнмеле хыттăн туса пынă пулин те, хăйсем тума шутланă результатсене тăвайман. Хаçатсем Чехословакири суйлавсем йĕркелĕн тата ним пăтранмасăр пулса иртни çинчен палăртаççĕ. Анчах Чехословаки çине тапăнас хăрушлăх пĕтмен-ха, Испанире фашисла интервенцине вăйлатса пыни, Испани республикĕн порчĕсенче йут çĕршывсен пăрахучĕсем çине сывлăшран бомбăсем пăрахни тата фашиссен ытти тĕрлĕ провокацисем те—çаксем вĕсем шухăша Чехословаки çине тапăнма хатĕр леннинчен сирсе йарас тĕллевпе пулса пыраççĕ.

Гитлĕрла Германи хыттăнах вăрçа хатĕрленет. Запасра тăракансене çĕнĕрен мобилизацилеççĕ. Австрине тытса илнĕ хыççăн запасра тăракансене çартан кайала йанă пулнă, халĕ ĕнтĕ вĕсене çара çĕнĕрен мобилизацилеççĕ. „Гитлĕрла çамрăксен" организацисем чикĕ хĕрринчи районсенче вăрçă вăхăтĕнчи пек пурнăçа куçаççĕ—вĕсене хĕçпăшаллантараççĕ тата Чехословаки чикки çывăхне илсе кайса тăратаççĕ. (ТАСС).

Китай салтакĕсен паттăрлăхĕ

— Ман çине çавăрăнса ан пăхăр... Çапăçу линине тытса чарса тăрăр...—çавăн пек пулнă Шаньдун провинцинчи çапăçура вилмелех аманнă Ло-Фан-гуйан, Китай çарĕсен батальйон командирĕн, йулашки сăмахĕсем.

„Чайна критик" журнал çапла çырат: „хăйсен тăван çĕршывне хĕрÿлĕ йуратакан Китай салтакĕсемпе командирĕсен хăйуллăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен каласа страници-страницăпе çырма пулат. Китай çарĕн бойецĕсем ăнланулă, дисциплинăлă, ăшă кăмăллă тата патриотисăмпа хавхаланнă".

Нумайах та пулмаст, Китайра нумай вăхăт хушши пурăннă, фронта темиçе хутчен те пырса курнă Америкă учонайĕ çапла калана:

— Китай салтакĕн çапăçма хăват пурри хасгарлăха çĕклекен вăй пулса тăрат тата Китай мĕн çĕнтериччĕнех вăрçма пултарнине ĕнентерет...

„10 уйăх ытла, — тесе çырат „Чайна критик" журнал,—Китай çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай чухне винтовкăсемпе тата пулеметсемпе çеç хĕçпăшалланнăскерсем, темĕнле хĕнхур-асап тÿссен те вĕсенниничен нумай çÿлте тăракан Йапонин çар техникине хирĕç хыта тăраççĕ".

„Йунайтед пресс" агентствин корреспонденчĕ, фронтри госпитăле пырса курнăскер, унта йăвăр аманнă Китай салтакĕсенчен те пĕр жалаба та илмен, тесе çырат.

„Ньйу-Йорк Геральд Трибун" хаçат корреспонденчĕн сăмахĕсем тăрăх, Китай салтакĕсем Йапони салтакĕсенчен те ытларах çапăçма пултараççĕ.

Таньцзин—Пукоу чукунçулĕ çинчи фронтра Китай салтакĕнчен çапла ыйтнă.

—Куньминаран (Йуньнань провинцин столицийĕ) мар-и эсĕ?

Салтак лăпкăн ответленĕ:

— Вăл кирлех те мар... Епĕ чи малтан Китай салтакĕ... Епĕ кирек ăçта çуралнă пулам—хамăн тивĕçе епĕ вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртетĕп.

Йут çĕршыв хаçачĕсенче таçта Хунань провинцинче инçетри йалта пурăнакан пĕр китаец хăйĕн амăшĕ патне çырнă çырăва пичетлесе кăларнă. Акă вăл:

„Епĕ киле пырса йуратнă ывăлĕ тумали ĕçсене тума пултарайманшăн 20 пин хут каçару ыйтатăп. Фронта кайнă чухне çул çинче епĕ йаланах сан çинчен, хамăн ывăл çинчен тата арăм çинчен шухăшласа пытăм. Халь хамăн винтовкăна тăшман йеннеле çавăрса, хамăн йулташсем те çав ĕçех тунине курса, епĕ пĕр ĕç çинчен анчах шухăшлатăп,—вăл ĕç тăван çĕршыва хÿтлесси. Епĕ хамăн пурнăçра шанчăклă салтак пулни йуратнă ывăл пулниччен те пысăкрах чыс пулнине пĕрремĕш хут туйатăп".

Çулĕ ăнланулăх, патриотисăм, Йапони захватчикĕсене хирĕç йулашхи йун тумламĕ йулмиччеех çапăçма хатĕр тăни,— хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн кĕрешме çĕкленнĕ Китай халăхĕн паллă йенĕсем. Вăл пахалăхсем кашни утăмрах пулаççĕ. Йапони çарĕсем [illegible] кĕрессине чăрăс тесе хăйсен пурнăçĕсене хывнă салтакĕсен нимĕрен хăраман хăйулă ĕçĕсем çинчен калакан фактсем нумай. Китай снайперĕсем тăшман çине йулашки хут пемесĕр çапăçу участкисене пăрахса хăвармаççĕ.

Китай салтакĕсемпе командирĕсем хăйсен нацийĕ никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн çапла кĕрешеççĕ ĕнтĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлăр!

Кçени Афанаçйĕвнă БЫЧКОВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Муркаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Тутаркас районĕнчи „Хĕрлĕ Йалав" колхозри колхозниксем Атапай йалсовет председателĕ пулса ĕçлекен Кçени Афанаçйĕвнă Бычковăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама пурпĕр кăмăллă пулса кандидата тăратнă.

Кçени Афанаçйĕвнă Тутаркас районĕнчи Курлуй йалĕнче вăтам хресчен çемйинче 1916 çулта çуралнă.

Кçени Афанаçйĕвнă совет влаçĕ тухне вĕренсе ӳссе пынăскер. Социалисăм çĕршывĕнче унăн пĕтĕм пурнăçĕ—çине тăрсах вĕренни пе тата ĕçленипе иртсе пырат. Вăл Анат. Кĕнерти туллимар вăтам шкултан 1933 çулта вĕренсе тухнă 1933—1935 çулсенче „Хĕрлĕ йалав" колхозра колхозница пулса ĕçлесе пурăннă.

1934 çулта вăл Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕ ретне кĕрсе комсомолта тата обществăлă ытти организацисенче активлăн ĕçлесе пырат. Çулта вăл организацилĕ тата агитацилĕ-массăлă ĕççене туса пыма пăнăхса çитет.

1936 çултан ăна Атапай вулав çурт пуçлăхĕ туса хураççĕ. Унтан вăл Атапай йалсовет çекретарĕ пулса ĕçлет. 1938 çул пуçламĕшĕнчен йалсовет председателĕнче ĕçлет.

Бычкова йулташ, аслă социалисăмлă çĕршыври ытти пĕтĕм çамрăксем пекех, социалисăм çĕршывне чунтанах йуратат, хăйĕн мĕн пур çамрăк вăйĕпе пĕтĕм хавалне хамăрăн социалисăмлă çĕршывшăн пама тăрăшсах ĕçлесе пырат.

Вăл пирĕн партийе тата социалисăмлă çĕршыва йуратнине ĕçре кăтартса пырат.

Муркаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем!

Чăваш халăхĕн тӳрĕ хĕрĕ, активлă комсомолка—Кçени Афанаçйĕвнă Бычковăшăн сасăлăр!

„Кам пирĕн совет хĕрарăмĕ хуçалăхпа управленин мĕн пур ĕçĕсенче малашне те ирĕклĕ тата тулли правалă пултăр тесе тăрăшат, вăл болшевиксен партийĕшĕн сасăлĕ, вăл коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлĕ".

Пелагейа Çергейĕвнă Меценатăвă хăйĕн суйлавçисем патĕнче

ЕЛĔК. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Пелагейа Çергейĕвнă Меценатăвă йулташ суйлавçăсемпе тĕл пулнă йатпа ийунĕн 11-мĕшĕнче Хуравар йалĕнче аслă пуху пулса иртрĕ. Пухура 102 çын пулчĕç. Кунта Федăрăв, Тимофейĕв, Ваçилйĕв т. ыт. йулташсем те тухса калаçрĕç. Вĕсем кашнийех Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Меценатăвă, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Дубăв йулташсемшĕн сасăлама пулса, ытти суйлавçăсене те çак тивĕçлĕ кандидатсемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Пухура пурте пĕр саслăн, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун—ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса суйлав участкине пырса, Дубăвпа Меценатăвă йулташсемшĕн сасăлама пулса резолюци йышăнчĕç.

П. Ç. Меценатăвă йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Малтанах епĕ сире мана шанса Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнишĕн пĕтĕм чĕререн, ырă сунса тав тăватăп. (Алă çупаççĕ).

Епĕ чăваш хĕрарăмĕ, патша самани вăхăтĕнче нуша курса ӳснĕскер, халĕ пысăк ответлă ĕçсенче ĕçлеме тивĕçлĕ пултăм. Мана Совет влаçĕ, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Çавăнпа епĕ коммуниссен партин çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. Спаçибă Сталин йулташа. (Алă çупаççĕ).

Есĕр, Хура Вар йалĕнчи суйлавçăсем, мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратса ман çине пысăк шанăç хутăр. Епĕ вăл шанăçа алăра çирĕппĕн тытса, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунизмăшăн, малашнех лайăх пурнăçшăн татах та лайăхрах тăрăшса ĕçлĕп.

Епĕ çамрăкăх мар. Патша самани вăхăтĕнче те пурăнса курнă. Ĕлĕкхи пурнăç кичемчĕ, пурăнма йăвăрччĕ. Уйрăмăнах хĕрарăмсене çын вырăне хумасăр, темиçе хут пусмăрта усранă. Çĕр çаман вĕсене. Пухăва тухса çакăн пек пурнăçа лайăхлатасси çинчен калаçăмăн. Шкулсене кайса вĕренеймен, вĕренесси çинчен шухăшламалли те пулман.

Аслă Октабĕр революцийĕ çавăн пек тискер патша саманине çапса салатрĕ. Çакăн хыççăн пирĕн пурнăç куллен кун лайăхланса пыма тытăнчĕ. Халĕ епĕр телейлĕ те савăнăçлă пурăнатпăр. Пирĕн Совет çĕршывĕ 20 çул хушшинче вăйлă держава пулса тăчĕ. Сталинла Конституци пысăк правасем пачĕ. Пирĕн ĕçлеме, канма, вĕренме правасем пур. Вĕсемпе туллин усă куратпăр. Халĕ хĕрарăмсем государствăна йертсе пырас ĕçре те ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсенченех инженерсем, командирсем, лётчиксем пур, йалсовет председателĕсем, колхоз председателĕсем, ферма пуçлăхĕсем, бригадирсем те мĕн чухлех.

Йулташсем! Капиталисăмла патшалăхсенчи ĕçсынисем чăтма çук йăвăр пусмăрта пурăнаççĕ. Унта фашисла йытăсем вăрçа хатĕрленеççĕ. Вĕсем пирĕн çине тапăнма шутлаççĕ. Анчах епĕр вăйлă. Вĕсене хамăр çине килме ирĕк памастпăр. Пирĕн çĕршыва татах та тĕреклетессишĕн ĕçлемелле. Халăх тăшманĕсемпе ывăнма пĕлмесĕр кĕрешсе, пысăк çитĕнӳсем тăвас йĕнĕпе татах та вирлĕн кĕрешмелле. Умра тăракан ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пырса, суйлав кунне пысăк ĕçсем туса çитерсе кĕтсе илемле.

Сыва пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Вера Каçйанăвна КАÇЙАНĂВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕмĕрле хула суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Çĕмĕрлери йăвăç каскалакан комбинатри тата „Болшевик" савăтри рабочисемпе служащисен, инженерлă-техниклă работниксен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Вера Каçйанăвна Каçйанăвă йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратрĕç.

Каçйанăвă йулташ 1906 çулта Çĕрпӳ районĕнчи Туçи йалĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ пĕчĕкренех инвалид пулнă, 1921 çулта вилнĕ. Революциччен Верă шкулта вĕренеймен. Шкулта вĕренес вырăнне унăн ĕçлеме каймала пулнă. Вăл 9 çулта чухнех кулак-сутăçсем патĕнче чăпта çапнă. Верăн амăшĕ 1929 çулта колхоза кĕнĕ.

1931 çулта Вера Каçйанăвă „Йединство" хапракĕнче станочниксен курсĕнче вĕреннĕ. Çав çултах кĕркунне курсран вĕренсе тухса Çĕмĕрле комбинатĕнчи хăма çуракан цехра чернорабочи пулса ĕçлет, унтан 4 уйăхран станочница пулса ĕçлеме пуçлат.

Халĕ Каçйанăвă йулташ çак комбинатрах столярнăй цехра чи паллă стахановка. Ĕç нормине 200—480 процентшер тултарса пырат. Вăл Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлеме пуçланăранпа хут вĕренчĕ. Халĕ те вăл Ленин тата Сталин кĕнекисене вуласа, хăйĕн политикăлă пĕлӳлĕхне ӳстерсех пырат. Обществăлă-политикăлă ĕçсене активлă хутшанса ĕçлет. Вăл 1931 çултанпа Горький крайĕнчи тата Чăваш облаçри профсойузсен совечĕн членĕ пулнă.

Каçйанăвă йулташ производствари пур çитменлĕхсемпе те вирлĕн кĕрешсе пырат. ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ умĕн вăл ПСК(б)П членне кĕме хатĕрленме сочувствуйущисен ретне кĕнĕ.

Каçйанăвă йулташ уйăхран уйăха ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырса çитĕнӳ тунине пĕтĕм республика пĕлет. Вăл Ленин—Сталин партишĕн, Совет влаçĕшĕн пĕтĕм чĕререн ĕçлет. Каçйанăвă йулташ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ кандидат.

Суйлавçăсен праçникĕ

Мăн-Сĕнтĕр. ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕнчи суйлавçăсем 500 çын ытла Мăн-Сĕнтĕре пухăнчĕç.

Трибунă çинче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ кандидат П. И. Калинкина тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ кандидат Зоя Ананйевна Андрейева йулташсем.

Митинга ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕ Шиверăв йулташ уçрĕ. Малтан Калайкассинчи „Марксист" колхозран килне доверенăй 43 çулхи Григорий Горланăв йулташ сăмах тухса каларĕ:

— Пайан епĕр кунта хамăрăн автомашинăпа килтĕмĕр, çамрăксемшĕн вăл нимех те мар пулĕ те, анчах ĕлĕкхи вăхăтра хура-шур тусне çыншăн вăл паха. Савăнас килет! Машини хамăрăн, пурте хамăрăн! Ĕлĕкхи вăхăтра йал-йал витĕр тухатăн: ку пысăк çурт камăн, тесен: çав пуйанăн, тетчĕç. А халĕ вĕсем колхозăн, пирĕн колхозниксен.

Кашни утăмра пире Сталин йулташ йертсе пырат, кашни ĕçе савăнса ĕçлетпĕр, малашне тата лайăхрах ĕçлеме пурте пур. Чи малтан Сталин йулташшăн, Сталин йулташ самани пăхса ӳстернĕ Чăваш халăхĕн хĕрĕсемшĕн—Андрейĕвă тата Калинкинă йулташсемшĕн хамăн сасса паратăп, пур суйлавçăсене те Калинкинăпа Андрейĕвă йулташсемшĕн сасăлама чĕнетĕп,—терĕ Горланăв йулташ.

Тухса калана йулташсем пурте Сталин йулташа асăнса, ăна тав тăваççĕ. Сталин йулташ тата унăн соратникĕсен йатне асăнмассерен „урра" кăшкăрни кĕрлесе кайат, музыкă „Интернационал" выльăт.

— Революциччен 40 çул платникре ĕçлерĕм, çапах хамшăн та хам пек чухăн хресченсемшĕн те чаплă çурт лартаймарăм. Колхозра 8 çул хушши платникре ĕçлесе çак вăхăтра йал палламала пулчĕ. Халĕ хам та чăнласах пуйан пурăнатăп, тет „Колос" колхозран килнĕ доверенăй Харитон Мочалов йулташ.

Митинга З. А. Андрейева тата П. И. Калинкина йулташсем тухса каларĕç.

Сĕнтер шывĕн сулахай айкинчи симĕс улăха пухăннă суйлавçăсем З. А. Андрейевăпа Калинкина йулташсен сăмахĕсене тимлĕн итлерĕç.

Çак кун суйлавçăсем вăхăта савăнăçлăн ирттерчĕç. Митинг хыççăн пысăк йармарка пулчĕ. Речĕ пирĕн лартса тухнă ларйоксенче тĕрлĕрен таварсем нумай пулчĕç.

Чикме хулинчен килнĕ районри колхоз театрĕ пысăк концерт пачĕ. Мари халăхĕн „Туй йуррине", „Ташă кĕввине" хорпа йурланине халăх савăнса итлерĕ.

Митингри пĕтĕм суйлавçăсем хăйсен сассисене Андрейĕвă йулташпа Калинкинă йулташшăн памалли резолюци йышăнчĕç.

Ç. Горланăв.

Н. М. Çеменăв йулташ суйлавçăсем патĕнче

ТРАК. Ийунĕн 13-мĕшĕнче Йанак йалĕнче суйлав умĕнхи митинг пулса иртрĕ. Йалсовечĕ умĕнчи площадьре 200 суйлавçă пухăннă. Трибунă умĕнче духовой оркестр илемлĕ йурăсем выльăт. Йалсовет председателĕ Лукин йулташ митинга уçса, сăмах ЧАССР Верховнăй Советне Исаков суйлав округĕ тăрах депутата суйлама тăратнă кандидата Никанор Миронович Çеменăв йулташа пачĕ.

Н. М. Çеменăв йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнăшăн сире пĕтĕм чĕререн малтан тав тăватăп. Есĕр мана шанни—вăл мана шанни анчах мар, вăл пирĕн партине шанни пулса тăрат. Мана Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстерчĕ. Çавăнпа та епĕ Ленин—Сталин партинчен пĕр утăм уйăрăлмасăр, ĕçхалăх пурнăçне савăнăçлă тăвассишĕн хамăн йулашки кунсем çитиччен пĕтĕм вăйрăн тăрăшса ĕçлесе пырасси çинчен сăмах паратăп. Ĕлĕк кайа йулă, пĕтес патне çитсе тăнă, тракомлă тĕттĕмĕ йулнă чăваш халăхĕ, уçă çул çине тухса савăнăçлă пурнăç илчĕ. Коммунисла парти, ун çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе Чăваш республикĕ вăйлă ӳсрĕ. Пирĕн республикăра халĕ хут пĕлменнисем çукпа пĕрех, йалхуçалăхĕ те, промышленнăç та кашни çулах ӳссе пыраççĕ. Пирĕн çитĕнӳсем Сталин йулташ йертсе пынипе пулнă. Сталин вăл—çĕнтерӳ!

Çавăнпа та Сталин йулташа Совет Сойузĕнчи пур республикăсенчи ĕçхалăхĕсем те хăйсен Верховнăй Совечĕсене суйлама пĕрремĕш кандидата тăратрĕç.

Сталиншăн, партишĕн, ĕçхалăхĕшĕн епĕ йулашки йун тумламĕ йулмиччен кĕрешме сăмах паратăп. Епĕ сирĕн шанчăка—халăх шанчăкне, пысăк ответлăха илсе ĕçре пурнăçлама сăмах паратăп.

Сыва пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕсен çулпуçĕ, пирĕн аттемĕр Сталин йулташ!

Сул йусанă çĕрте

ÇĔМĔРЛЕ. Хутар йалсовечĕ кашни çулах йал хушшинчи çулсене йусаса тăрат. Халĕ урамсенчи çул çине 425 метр тăршшĕ шашкă сарма тытăнчĕç. Ку ĕçре уйрăмах 5-мĕш бригада тăрăшса ĕçлет. Вăл бригада 37 метр шашкă сарса, хăйне панă плана майăн 3-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ.

Колхозниксемпе йединоличниксем çулсем тăвас ĕçре пысăк хаваслăхпа ĕçлеççĕ. Кану вăхăтĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенисене, депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен йалан калаççĕ. Ку тĕлешпе кашни участокра пĕрер агитатăр ĕçлет. Сул çинче ĕçлекенсем тăташах радио итлеççĕ.

Йалсовечĕ çулсăр ĕçре ĕçлекенсене кăтартма фото-хаçат кăларчĕ.

Й. Мозайаков.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ ССР Сойузĕнчи пĕтĕм ĕçсынисен мирлĕ пурнăçĕн хăватлă тĕрекĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Мускаври Пролетарски стрелковăй дивизин бойецĕсем стройра.

(Сойузфото).

Отпуска килнĕ çар комиссарĕ-орденоносĕц А. Антонăв йулташ митингра калана сăмахран

— Пирĕн Хĕрлĕ Çар—никам çĕнтерейми çар. Хĕрлĕ Çара Сталин йулташ куллен-кун йертсе пырат, вăл пулăшнипе пирĕн çар техники вăйлă ӳсрĕ. Епĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕре сыхă тăракан çар чаçĕсенче ĕçлетĕп. Йапонипе Манчжури çарĕсем часах пире провокаци тума хăтланаççĕ.

Епĕр вĕсене вирлĕ отпор паратпăр. Сталин соратникĕ Ворошилăв йулташ йертсе пынипе, вăхăт çитсен, пире тăшмансем тапăнма хăйсан, вĕсене хăйсен территори çинчех лапчăтса такăпăр!

Сыва пулччăр Сталин пăхса ӳстернĕ ĕçхалăх кандидачĕсем!

Сыва пултăр пирĕн çулпуçĕ Сталин!

* * *

Унтан колхозник Йеремейĕв, учител Иванов, райĕçтавком председателĕ Игнатйĕв йулташсем тухса Н. М. Çеменăв йулташ ЧАССР Верховнăй Советне суйланма тивĕçлине палăртса, уншăн сасăлама суйлавçăсене хĕрӳлĕн чĕнчĕç.

Хаçат ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсем

Парти Чăваш Обкомĕ организацилене хаçат работникĕсен шкулĕ кăçал çĕнĕрен 16 çын вĕрентсе кăларчĕ. Шкултан вĕренсе тухнă йатпа ийунĕн 12-мĕшĕнче студентсемпе преподавателсен вечĕрĕ пулса иртрĕ.

Хаçат работникĕсен шкулĕнче вĕренсе тухнă йулташсем районри хаçатсене ĕçлеме кайаççĕ.

Вĕренсе тухнисем ĕнер, ийунĕн 13-мĕшĕнче, Мускава екскурсие тухса кайрĕç.

Автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсем

Автономлă республикăсенче пулакан суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче участокри суйлав комиссинче икĕ бюллетень алла илеççĕ: пĕри—сойузлă республикă Верховнăй Советне суйламали, тепри—автономлă республикăн Верховнăй Советне суйламали пулат.

Пирĕн тăван çĕршыв—нумай нацилĕ государствă. Унта нацисем, нацилĕ ушкăнсем тата халăхсем утмăла йахăн пурăнаççĕ. Патша вăхăтĕнче тăнă çулсенчех, нацийĕсен тăвĕнче тата парассин болшевикла программине тунă май, Сталин йулташ çапла çырнă: „Наци хăйĕн ирĕкĕпе майлашăнса пурăнма пултарат: Вăл хăйĕн пурнăçне автономи йĕркипе тума пултарат. Унăн ытти нацисемпе федеративлă хутшанса пурăнма тивĕçлĕх пур".

Октабĕрти социалисăмлă аслă революци патша чухнехи халăхсен тĕрмине çĕмĕрсе тăкрĕ, вăл унченхи пусмăр тӳссе пурăннă халăхсене ирĕке кăларса, вĕсене ирĕклĕн ӳсме пысăк май туса пачĕ. Аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе ĕлĕк пусмăрта тертленсе пурăннă нацисемпе нацио-налнăççем хăйсем çинче нумай çĕмĕрсем хушши кăркаланса тăна сăнăйăра илсе пăрахрĕç, хуçалăх тата културă тĕлĕшĕнчен чечекленсе ӳссе пырас çулпа çирĕппĕн малала кайрĕç.

Рабочи класăн диктатури ССР Сойузĕнчи пур халăхсене те пултарулăн ӳсме анлăн çул уçса пачĕ. ССР Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсен ĕç массине çывăх тăракан совет государствине туни—пирĕн партин ленинла-сталинла политикин асларан та аслă çĕнтерĕвĕсенчен пĕри пулса тăрат. Чылай халăхсем сойузлă республикăсем турĕç. Нумайĕшĕсем автономлă республикăсем туса хăйсен государствăннăçне йĕркелерĕç. Вĕсем—сойузлă республикăсене кĕрекен автономлă республикăсем.

РСФСР-не автономлă советлă социалисăмлă республикăсем—17: Тутар, Пушкăрт, Бурйат-Монгол, Дагестан, Кабардин-Болкар, Калмык, Карел, Коми, Крым, Мари, Мордва, Атăл çинчи нимĕççен, Çурçĕр-Оçетин, Удмурт, Чечен-Ингуш, Чăваш, Йакут автономлă советлă социалисăмлă республикĕсем кĕреççĕ. Украйна советлă социалисăмлă республикине пĕр автономлă республикă—Молдави автономлă республикĕ кĕрет. Азербайджан советлă социалисăмлă республикине пĕр автономлă республикă—Нахичевань автономлă республикĕ кĕрет. Грузин советлă социалисăмлă республикине икĕ автономлă республикă—Абхазипе Аджари автономлă республикĕсем кĕреççĕ. Узбексен советлă социалисăмлă республикине Кара-Калпак автономлă республикĕ кĕрет. Çапла вара, ССР Сойузĕнче мĕн пурĕ 22 автономлă советлă социалисăмлă республикă шутланат.

Автономлă республикă ССР Сойузĕн тата хăй кĕрекен сойузлă республикăн саккунĕсене пăхăнса тăрат. Çакăнпа пĕрлех автономлă республикăсем хăйсен территорине тивĕçлĕ ĕçсене хăйсем тĕллĕн туса пыраççĕ. ССР Сойузĕн Сталинла Конституцийĕн 89-мĕш статйи çапла калат: „Автономлă республикăн государствă влаçĕн аслă органĕ АССР Верховнăй Совечĕ пулса тăрат".

АССР Верховнăй Совечĕсене, ССР Сойузĕн тата сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсем пекех, тĕнчери чи демократилĕ, пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа, 4 çуллăха суйлаççĕ. Представителствăн нормисене, автономлă республикăн вырăнти условисене шута илсе, ССРС тата сойузлă республикăн Конституцийĕсемпе килĕшӳлĕ тунă Конституцийĕнче палăртнă пек тăваççĕ.

АССР Верховнăй Совечĕ, автономлă республикăн саккунсем кăларакан пĕртен пĕр органĕ пулса тăрат. Вăл автономлă республикăн Конституцине йышăнат, унтан вара ăна сойузлă республикăн Верховнăй Совечĕ çирĕплетет. Автономлă республикăсен государствă влаçĕн аслă органĕсем ĕççынисене кирлĕ, усăлă, творчествăлă ĕçсем тума пысăк майсем илеççĕ. Вĕсем государствă влаçĕн вырăнти органĕсене йертсе пымала, влаçăн çав органĕсем халăхпа çывăх тăрса, унăн ыйтăвĕсене мĕн таран пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăмала. Вĕсем автономлă республикăсен халăх хуçалăх планĕсене тата бюджечĕсене çирĕплетеççĕ. Республикăри промышленнăç предприйатийĕсене, йалхуçалăхне тата суту-илӳ организацийĕсене йертсе пырасси те вĕсен аллинче пулат. Вĕсем сойузăн йе сойузлă республикăн органĕсене пăхăнса тăракан предприйатисем мĕнле ĕçленине, çĕрпе, çĕр пуйанлăхĕсемпе, вăрманпа тата шывпа мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Автономлă республикăсен государствă влаçĕн аслă органĕсемшĕн халăха çутта кăларас, културă строителстви, социаллă пулăшу парас, халăхăн сывлăхне упрас тĕлĕшпе, тепĕр тĕрлĕ каласан, халăхăн куллен-хи пурнăç интересĕсемпе çыхăнса тăракан пайсенче ĕçлеме пысăк майсем пулаççĕ. Формă тĕлĕшĕнчен нацилĕ, содержанийĕпе социалисăмлă културăна малала ӳстерсе пырассишĕн тăрăшасси—АССР Верховнăй Совечĕсен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнмала.

Сталин йулташ 1920 çултах „советлă автономи инçетри вырăнсене тĕп Российăпа пĕрлештерес тĕлĕшпе чи пурнăçланма пултаракан, чи конкретлă формă пулса тăни" çинчен çирĕплетсе каланă. Вăл ун чухнех „инçетри вырăнсенче совет влаçĕ çĕнтересси, инçетри вырăнсем тĕп Российăна пĕр пĕтĕмĕшлĕ государствăна пĕтĕçесси, вырăнсенче шкулсен йышне ӳстермесĕр, суда, администрацине, влаç органĕсене т. ыт. халăхăн пурнăçĕпе йăлине тата чĕлхине пĕлекен çынсенчен тумасăр, пулма пултарайманни" çинчен татăклăн каланă. Совет влаçĕ ку тĕлĕшпе çак çирĕм çул хушшинче пысăк ӳсĕмсем турĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхсем нацилĕ республикăсен сăн-питне тĕпренех улăштарчĕç. Вăйлă индустри вучахĕсене тунă, колхозсемпе совхозсем йалхуçалăхĕнче калама çук пысăк улшăнусем кӳчĕç. Росçийă федерацине кĕрекен автономлă республикăсенчен хăшне-пĕрне çеç илсе пăхар. Пĕтĕм РСФСР-ан шултра промышленнăçĕн продукцийĕ, 1930 çулпа танлаштарса пăхсан, 1936 çулта 7,5 хут ӳсрĕ. Çав вăхăтра нацилĕ республикăсенче: Йакут АССР-че—14,9 хут, Удмурт АССР-че—11,9 хут, Кабардин-Болкар АССР-че—59,6 хут, Бурйат-Монгол АССР-че—12,2 хут, Çурçĕр-Оçетин АССР-че 16,7 хут ӳснĕ.

Нацилĕ республикăсенче, хуçалăх кăна мар, културă та хăвăрт ӳссе пырат.

Нацилĕ республикăсемпе облаçсенче вырăнти çынсенчен рабочи класăн, колхозлă хресченсен, совет интеллигенцин аван кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсенчен чи лайăххисене сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама кандидата палăртнă. Фашисăмăн ылханлă йытисемпе—троцкисла-бухаринла тата буржуаллă-националисла бандитсем, хăйсен вăхăтĕнче автономлă республикăсенчен чылайĕшĕсенче йертсе пыракан органсене хĕсĕнсе кĕрсе сахал мар сăтăрланă. Сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес, революцилĕ сыхăлăха йаланах ӳстерсе пырас задачăсем нацилĕ республикăсенче сарлакан тăраççĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама палăртнă кандидачĕсем—халăх хушшинчен тухнă, Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче ӳсе çитĕннĕ çынсем. Вĕсем—партире тата партире тăман болшевиксем, пирĕн тăван çĕршыв патриочĕсем. Вĕсем ĕççынисен массине çывăх, вĕсем Ленин—Сталин ĕçĕн çĕнтерĕвĕсемшĕн тăшмансемпе пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме хатĕр тăраççĕ.

И. Федăрăв.

(„Правда" хаçатран).

Машинăсем уйăха тухма хатĕр

Çĕнĕ Пинерти (Шăхасан районĕ) „Пинер“ колхоз уйри тырпулсене пуçтарса кĕме аннăçлăн хатĕрленет. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес ĕçре машинăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна хисепе илсе, колхоз жнейкăсене йусаса лартрĕ. Жнейкăсемпе ĕçleme те çынсене уйăрса хунă. Вĕсем темиçе çул машинăсемпе ĕçленĕскерсем.

Кашни бригадăрах пĕрер витнĕ итем. Çаксене те йусаса, унти кивĕ улăмсене тасатнă.

Хальхи вăхăтра колхозниксемпе колхозницăсем уйăра çум çумлаççĕ, шăналăксем, михĕсем хатĕрлеççĕ. Верен-пайăвсем йаваççĕ. Кашни çын хăй вырăнĕнче ответлă пулса ĕçлет.

В. Лукин.

Кармалти (Йĕлчĕк р.) Кирăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем калчасене лайăх пăхса çитĕнтерсе вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Бригадăсенчи звеносем тырпулсем çинчи çумкурăксене тасатсах тăраççĕ. Ку вăхăтчен 345 гектар çинчи çумкурăксене çумланă.

Колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕртме тĕплĕн хатĕрленет. Йалхуçалăх машинисене пурне те йусаса лартнă. Машинăсемпе ĕçleме çынсене те хатĕрленĕ. Вĕсене пурне те машиноведсен курсĕнчен вĕрентсе кăларнă.

Колхозниксем, тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ чухне вĕсем тăккаланасса хисепе илсе, кĕлтесене турттарма шăналăксем, йешчĕклĕ урапасем хатĕрлерĕç. Витнĕ итемсене тасатса хучĕç. Хаљ ĕнтĕ ампарсене тасатса дезинфекцилеççĕ.

А. Репков.

Утă çулма кирлĕ ĕçхатĕрĕсене халех кӳрсе килмеле

Хĕрлĕ Чутай. Тепĕр вунă-вуникĕ кунтан районри колхозсем клевĕр тата хăшпĕр çĕрте улăхри куракăсене çулма тухаççĕ. Чылай колхозсен утă çулмали машинăсем пур, анчах вĕсем çителĕклĕ мар. Çавăнпа пуринчен ытларах çавасемпе çулмала пулать. Хаљ ĕнтĕ çавасене тата лапаткасене хатĕрлемели вăхăт. Çапла пулин те районри сутуилӳ организацийĕсем нихăшĕ те çав ĕçхатĕрĕсене кӳрсе килмен, лавкасенче çавасем те, лапаткасем те çук.

Районĕпе пурĕ тырă вырмали машинăсем 140 машинă шутланать. Вĕсенчен 55 машинăна йусамала. Ийунĕн 10-мĕшне 18 жнейкă çеç йусанă. Тырă вырмали машинăсем çинче ĕçleme вĕрентме ийунĕн 16-мĕшĕнче районра курс уçăлать. Çав курспа пĕр вăхăтрах тата молотилкă çинче ĕçлекенсем валљи те курс организацилеме палăртнă.

Витнĕ итемсем кашни колхозрах, кашни бригадăрах пур. Вĕсене хаљ йусаççĕ, пĕчĕкрех пулнисене аслăлатаççĕ. Анчах чылай колхозсенче иртнĕ çулхи улăмсене хаљ те тасатма тытăнман-ха, çавăн пекех клешчсенчен тасатас тĕлĕшпе тумали ĕçсене те тума тытăнман-ха.

М. К.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чукунçул линине Шупашкара хывса çитнĕ йатпа пулнă митинг. Канаш-Шупашкар чукунçул строителстви управленин началљникĕ Вавилкин йулташ сăмах калать.

Фото—Г. Харлампийăвăн.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем мĕнле иртсе пыраççĕ

Вĕренӳ çулĕнче малтан пуçласа вĕçне çитичченех лайăх ĕçлесе пынă шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене те йĕркелĕн, пысăк çĕкленӳпе иртереççĕ. Хĕрӳлĕ çулталăка аннăçлă вĕçлекен шкулсенчен Шăхасанти, Именкассинчи (Трак р.), Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулсене уйрăмăн палăртмала. Çак шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсене кĕтсе илме тĕплĕн хатĕрленнĕ, тĕрĕслӳ, инструкци кăлартнă тăрăх, йĕркелĕн те тĕрĕс иртсе пырать. Директăрсемпе вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕсем кунта çырулăх ĕçĕсен тексчĕсемпе темисене тата тĕрĕслӳ билечĕсене тимлĕн тишкĕрсе малтан пăхса тухнă. Тĕрĕс мар çырнă билетсене прахăçласа, çĕнĕрен çыртарнă. Шкул администрацийĕ учителсенчен çакăн пек çирĕп ыйтни пĕлӳ тĕрĕслевĕсен ответлăхне ăнланса çитмен хăшпĕр учителсемшĕн ытлашширех пек те туйăнать. Сăмахран, Шăхасан вăтам шкулĕнчи Волкăв учител вырăс чĕлхипе ыйтмали ыйтусене билетсем çине йанăшсем туса çырнă. Директăр ăна хăшпĕр ыйтусене тӳрлетсе, билетсене çĕнĕрен çырма хушнă. Волкăв йулташ вăра куншăн çиленнĕ.

Районри сутĕç пайĕсенчен пĕлӳ тĕрĕслевĕн ĕçне Шăхасан, Кувакинă тата Шупашкар сутĕç пайĕсем лайăх йертсе пыраççĕ.

Анчах пĕлӳ тĕрĕслевĕсене организацилессипе иртерес ĕçре хăшпĕр шкулсем пысăк йанăшсем тăваççĕ, тĕрĕслеве иртермели инструкцине пăсаççĕ. Уйрăм шкулсем тĕрĕслӳ расписанисене йе ытахаљтен тенĕ пек, йе пачах пăтраштарса тунă. Трак районĕнчи Супар туллимар вăтам шкулĕнче пысăк йышлă классене икшер ушкăна уйăрнă, расписани тăрăх вара пĕлӳ тĕрĕслевне пĕр тĕрлĕ предметпа пĕр кунта мар, кашни уйрăм ушкăнра расна кунсенче иртерме палăртнă.

Шăхасан районĕнчи Шуркасси туллимар вăтам шкулĕнче ачасен пĕлĕвне пĕр тĕрлĕ предмет тăрăх çырупа тĕрĕслесе тухсан, çав предмет тăрăххах калаçупа нумай вăхăт иртсен (5—6 кунран) тин тĕрĕслеççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Есмĕл туллимар вăтам шкулĕнче пур тĕрлĕ çыру ĕçĕсене те тĕрĕслевĕн малтанхи 4 кунĕнче иртерме палăртнă, çавна пула вĕренекенсем тĕрĕслеве çителĕклĕ хатĕрленсе пыма пултарайман.

РСФСР Сутĕç Халăх Комиссарĕ Тӳркин йулташ вырăс мар шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсен срукне тăсмалли çинчен кăлартса панине Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç, Турханкасси, Шăхасан районĕнчи Шуркасси шкулĕсенче тата ытти хăшпĕр çĕрте кирлĕ пек шута илмен.

Шуркасси туллимар вăтам шкулĕнче тĕрĕслеве тăратмала маррисем миçе ача пуррине, миçе ачаран мĕнле предметсемпе çĕнĕрен хушса ыйтмалине ийунĕн 2-мĕшĕччен те пĕлмен, çавăнпа вĕсен тĕрĕслӳ расписанийĕ те çирĕп пулма пултарайман. План тăрăх пĕлӳ тĕрĕслевĕ ийунĕн 3-мĕшĕнче пĕтмеле пулнă. Хăшпĕр ачаран уйрăм предметсемпе хушса ыйтмали çинчен пачах маннă, кун пек ыйтмалисем кунта çук мар, уйрăм ачасенчен ик-виç предметпа та хушса ыйтмала.

Хăшпĕр çĕрте тата тĕрĕслӳ инструкцийĕн пĕр класра иккĕмĕш çула мĕншĕн хăварасси çинчен калакан пунктине ăнланман. Вĕренекен ача пĕлӳ тĕрĕслевне тăмали предметсем тăрăх 3 предметпа „плохо“ паллăсем илсен, ăна çав класрах тепĕр çула хăвармала, тенĕ инструкцире. Кувакинă районĕнчи Сутăгă туллимар вăтам шкулĕнче ачасен пĕлĕвне кăлартакан çулталăкри паллăсене вĕренӳ çулĕн 4-мĕш чĕрĕкĕнче тĕрĕсленĕ тăрăх кăна лартнă, çавна пула 19 вĕренекенрен 7 çынна тĕрĕслеве тăратман.

Тĕрĕслӳ иртерме ассистентсем пур çĕрте те уйăрнă. Анчах шкулсенчи ассистентсенчен пурте мар тĕрĕслӳ инструкцийĕ тăрăх çирĕп ĕçлесе пыраççĕ. Чылай çĕрте ачасен çыру ĕçĕсене çийелтен пăхса тухаççĕ, йе преподавателпе ассистент çав ĕçсене хăйсем хушшинче валеçеççĕ те, пĕри вăра—пĕр пайне, тепри—тепĕр пайне тĕрĕслет. Учител те ассистент та вĕсене малтан пуçласа вĕçне çитиччен пăхса тухмаççĕ. Шăхасан вăтам шкулĕнче ачасенчен ыйтнă чух Васильĕв учител хаçат вуласа ларать, Трак вăтам шкулĕнче вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕсенче (5—6 классенче) 7—8-шер йанăш палăртмасăр хăварнă, тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех „посредственно“ паллăсем лартнă, ассистентсем ку протоколсене алă пусса çирĕплетнĕ.

Пĕлӳ пахалăхĕсем йенчен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси вăтам шкулĕ начар тĕслĕхсем кăлартрĕ. 10-мĕш класра вĕренекен 14 ачаран вырăс чĕлхипе „хорошо“ паллă—1 çын, „посредственно“—5 çын, „плохо“—6 çын, „оч. плохо“—2 çын илчĕç. Кусемер пуçламĕш шкулне илсен тĕслĕхсем тата начартарах. Кунта 4-мĕш класра вĕренекен 30 ачаран вырăс чĕлхипе (çырупа) „хорошо“ тата „посредственно“ паллăсем пĕтĕмпе те 5 ача çеç илнĕ, ыттисен—начăр та питĕ начар паллăсем (учителĕ Мйаçников).

Пĕлӳ тĕрĕслевĕ тĕрлĕрен шкулсенчи ачасен пĕлĕвĕсем пĕр тĕрлĕ предметпах тĕрлĕ пулнине кăлартса парать. Шăхасан районĕнчи Шупуç Чуракасси туллимар вăтам шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе çырма та, калаçма та ирĕклĕнех пултараççĕ. Çав вăхăтрах Шăхасан вăтам шкулĕнчи 6 мĕш класра вĕренекенсем вырăсла начар пĕлеççĕ, падежсем тăрăх шут вĕçлевĕсемпе йат вĕçлевĕсене тума пĕлмеççĕ.

Çавăн пекех Шăхасан тата Трак вăтам шкулĕсен 6-мĕш класĕсем хушшинче ботаникă тăрăх пысăк уйрăмлăх пур. Шăхасан шкулĕнчи ачасем пĕлӳ тĕрĕслевĕнче ботаникăпа ыйтусене ответленĕ чух чĕрĕ чечексемпе, гербарисемпе тата тĕрлĕ таблицăсемпе усă кураççĕ, ыйтусене ăнланмала, татăклăн ответлеççĕ. Трак шкулĕнче вара ботаникăпа тĕрĕслӳре нимĕнле пособи те çук. Ачасен пĕлĕвĕсем ансăр, ӳсен-тăрансен йачĕсене вĕçĕмсĕр пăтраштараççĕ, вĕсем йепле хунаса йышланни çинчен каласа пама пултараймаççĕ. Кунти вĕренекенсен шучĕпе шĕшкĕ майри кăчăкăран пулать иккен.

Хăшпĕр çĕрте ачасен пĕлĕвне кăлартакан паллăсене лартнă чух ӳстерме, улталама пăхнисем те пулкаланă. Есмĕл (Сĕнтĕрвăрри р.) тата Карач (Куславкка р.) туллимар вăтам шкулĕсенче çыру ĕçĕсенче 9—16-шер йанăш тунисене те „посредственно“ паллăсем лартса панă. Тепĕр çĕрте тата ачасенчен сăмахпа ыйтнă чух, билетсем çине çырса панă ыйтусемсĕр пуçне, учителсем ачасене тӳрех ответ тупма пулăшакан вĕçĕмсĕр ыйтусем парса лараççĕ. Çапла май вĕсем „посредственно“ паллăсен шутне ӳстереççĕ, çав вăхăтрах пĕлӳ тĕрĕслевĕн йĕркине аркатаççĕ. (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç шкулĕ тата Шăхасан вăтам шкулĕ).

Тĕрĕслӳ валљи хатĕрленĕ çыру ĕçĕсен пысăкăшĕ пур çĕрте те пĕр пек мар. Шуркасси вăтам шкулĕнчи 4-мĕш класа вырăс диктанчĕ валљи 38 сăмахлă, Трак шкулĕнчи 4-мĕш класа—83 сăмахлă текстсем панă.

Трак районĕнчи сутĕç пайĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсене пачах йертсе пымасть. Сутĕç пайĕн инспекторне Именкассинчи 10-мĕш клас çумне çирĕплетнĕ, ытти шкулсенче вăл пачах пулмасть. Районри сутĕç пайĕн пуçлăхĕ те ийунĕн 8-мĕшне çитиччен пĕр шкулта та пулман.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕн йулашки кунĕсем йулчĕç. Пирĕн шкулсен çулталăкри ĕçне тĕплĕн пăхса тухса, çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене тĕрĕс палăртмала, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валљи болљшевикла вывăдсем тумала.

П. Д. Данилăв.

Çум çумласси кайа йулать

Тăвай районĕнчи колхозсем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илес тĕлĕшпе Вăрмар районĕнчи колхозсемпе социалисăмла ăмăртăва тухнă. Тăвай районĕнчи малта пыракан колхозсем хăйсем çине илнĕ облазателствăна пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем уйри калчасене çумкурăксенчен тăса тытса тăраççĕ. Кунпа пĕрлех тырпулсене пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕме хĕрӳлĕн хатĕрленеççĕ.

Акă, Киччĕри „Майăн 1-мĕшĕ“ колхозра 341 гектар çинчи çумкурăксене пĕрремĕш хут çумласа тухнă. Çум çумлас ĕçе бригадăсенчи звеносем туса пыраççĕ. „Майăн 1-мĕшĕ“ колхоз утă çулма та хатĕрленсех çитнĕ. Утă çулмали машинăсене йусанă, çавасене туптатнă, лапаткасене кирлĕ таран туйанннă.

Районра çумкурăксемпе кĕрешме тата тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрлеиме тытăнман колхозсем те çук мар. Сăмахран, Çалпуçĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан, Кив Пуйанкассинчи „Социалисăм“, Ураскассинчи „Ĕçлĕх çулĕ“, Чӳкçырминчи „Коммунар“ колхозсем ку вăхăта çитсе те çумкурăксене çумлама тытăнман.

Çĕнĕ Ишпуç, Тĕмер тата Вăрманхĕрри колхозĕсем кĕрхи тулă калчисене çумкурăксенчен тасатнипе лăпланса ларнă.

Кунта райçĕрĕç пайĕ пирки те каласа хăварас пулать. Вăл колхозсене çум çумлас, тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕççенче куллен йертсе пымасть.

В. Илйин.

Иккĕмĕш хут çумлаççĕ

АСЛĂ ЧАКРИ (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозăн бригадисенчи звеносем тырпулсене иккĕмĕш хут çумкурăксенчен тасатма тытăнчĕç.

Çум çумлас ĕçре иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсем малта пыраççĕ. Й. Павлăвă, А. Илйина комсомолкăсем стахановла ĕçлеççĕ. Вĕсем çум çумлас ĕçре нормăна икĕ хут ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Колхоз тырпулсене пуçтарса кĕртме тĕплĕн хатĕрленет. Хаљ 3 жнейкă йусанă, çĕнĕрен тепĕр жнейкă туйанна. Витнĕ итемсене йусанă, вĕсене кив улăмсенчен те тасатнă.

В. Андрийанăв.

Çулсене йусаççĕ

Шăхасан районĕнчи Анат Вăрманйал йалсоветне кĕрекен йалсенче çулйĕрсене йусама тытăнчĕç. Анаткас Кипеч йалĕнче çулсене тикĕслерĕç, шырлансене тултарчĕç тата йусанă çулсем çине хăйăр сарчĕç, кĕперсене те йусаççĕ.

Çав вăхăтрах Малти Антавăш йалсоветĕнче çулйĕрсене йусасси çинчен шутламаççĕ те. Çулйĕр çекци пуçлăхĕн Феофанăв йулташăн ку ĕçе тытăнма вăхăт ĕнтĕ.

Й. Степанăв.

Автотранспăртри сăтăрлăхăн йулашкисене пĕтермеле

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла шпионсем, диверсантсем, сăтăрçăсем çамрăк автотранспăрта, вăл хăвăрт ӳснине, чукунçулпа пĕрлех пирĕн çĕршывăн сыхлăхне хăпартас çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăнине курса, питĕ пысăк сийен тунă.

Сăтăрçăсемпе диверсантсен тăшманла йăвисене аркатса тăкнă, анчах вĕсен тасамар йĕрĕсене, сăтăрлă ĕççен йулашкисене автотранспăртра халĕ те пĕтермен-ха. Чăваш республикин автотранспăртĕнчи сăтăрçăсен йулашкисене пĕтерес ĕç хаљхи вăхăтра çителĕксĕр пырать. Центăрти тата районсенчи организацисен йухăнас патне çитернĕ хуçалăхĕсене халиччененех ура çине тăратман.

Сăмахран, Чăвашсойузăн автобазин хаљхи вăхăтра пур пек автомобилсен 25 процентпе çеç усă курать. Техникăла тĕрĕслев иртернĕ хыççăн усă курма йурăхлă автомобилсем тата сахалтараххи паларнă. Чылай машинăсем çулталăка йахăн усă курмасăр лараççĕ. Çĕмĕрле районĕнче çӳреме йурăхлă машинăсем 53 проц. çеç йулнă, ыттисем 6 уйăха йахăн йусава кĕтсе лараççĕ. Райĕçтăвкомăн 4 машинă, вĕсенчен пĕри 2 уйăх ытла, тепри 2 çула йахăн ĕçлемесĕр лараççĕ. Вĕсен пайĕсемпе аггрегачĕсене илсе кайса пĕтернĕ. Машинăсене усă курмала тăвас тесе нимĕн те тумаççĕ. Кун пек тĕслĕхсене вĕçĕмренех илсе кăтартма пулать. (Çĕмĕрле вăрман пункчĕ, заготзерно кантурĕсем т. ыт. те).

Нумай хуçалăхсенче машинăсемпе усă курас ĕçе йапăх организациленĕ, çавна пула йапаласем турттарма хакла ларать.

Запаслă пайсене, резинă тата аккумулљатăрсене кӳрессине йусакансен тата машинăпа çӳрекенсен кадрĕсене хатĕрлесси автопарк ӳсĕмĕнчен нумай кайа йулса пырать. Ку вăл, паллах, Совет Сойузĕнче вăл метериалсем çитменрен, кадрсем хатĕрлеме май çукран мар, планлакан тата кӳрсе килсе тăракан организацисемпе хуçалăх çыннисем çак ĕçĕн участки çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхманнинчен тата сăтăрла ĕççен йулашкисемпе çителĕклĕ кĕрешменнинчен килет.

Шупашкарти машинăсем йусакан базăн йĕркесĕр ĕçпе—автомашинсене типтерлĕ, пахалăхлă йусассипе интересленменнине кăтартса хăварма кирлĕ. Кунта ремонт ĕçне йапăх, алран кайăр атмана, тенĕ йевĕр туса пыраççĕ. Çавна пула ремонтран тухнă машинăсем часчасах пĕрер пин километр чупмасăрах каллех йусамала пулса тăраççĕ. Сăмахран, „Красная Чувашия“ издателствăн машинине тăравсăр йусанă пирки, 800 километр чупнă хыççăнах, стройран тухнă.

Ĕç дисциплинине пăсни, ĕççĕ ӳсĕрĕлни тата машинăсемпе усă курас йĕркесене йатарласах пăсса пыни—тăшманла ĕççен йулашкийĕ. Анчах учреждениесен хăшпĕр руководителĕсем çавăн пек çитменлĕхсемпе татăклăн кĕрешсе пырас вырăнне, правилăсене хăйсем пăсса пыраççĕ. Чăваш опытлă станцине кĕрекен Карачура вăрман участкинчи завхоз Иванов Григорий З. Чернов шофĕре пракăпа ерех ĕçтерсе ӳсĕртнĕ те вăл ӳсĕр пуçпа грузовике çул çинчен хăвăрт пăрса стройран кăларнă, хăйне, Иванов завхоза тата ыттисене те амантнă. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Çĕмĕрле районĕнчи уполномоченнăйĕ Бобров Хĕрлĕ Чутайри уполномоченнăйне панă машинăна илнĕ те, регистраци тумасăрах ерне хушши усă курнă.

Пăрачкав совхозĕн директăрĕ Агапăвпа МТСтанцин директăрĕ Губин автопарка йухăнтарса йанă. Вĕсен хаљхи вăхăтра пĕтĕм машинăсен хисепĕнчен 15—20 процент çеç ĕçе йурăхлă. Автомашинăсене йусас тĕлĕшпе пĕри те кирлĕ ĕççене тумаççĕ.

Районри çĕрĕç пайĕсемпе машинă-трактăр станцисем колхозсенчи автомашинăсене йĕркелĕ тытас тĕлĕшпе пулăшманнине уйрăмăнах палăртса хăвармала. Колхозсенче машинăсемпе йĕркесĕр усă курнине тата чипер пăхса усраманнисене пула, вĕсем хăвăртах йурăхсăра тухаççĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сăкăт-Торпик йалĕнчи Буденнăй йачĕпе тăракан колхозăн машини 13342 километр (çӳремели хисепĕн 11 процентчĕ) çӳренĕ хыççăнах пăрахăçа тухнă.

Кăçалхи çулăн пĕрремĕш квартăлĕнче нумай хуçалăхсем çунтармалисене ытлашши тăкакларĕç. Кун пеккисен шутне Шупашкарти коммуналлă хуçалăх, Чăвашстройтрест, çыхăну управленин автобази, резиналă йапаласем тăвакан савăт, Чăваш автогужтрест т. ыт. те кĕреççĕ. Асăннă организацисенче çунтармалисене пĕтерни нормăран 30 проц. иртсе кайнă. Апла пулин те, айăплисем ответ тытмасăрах йулнă. Ку вăл работниксем хушшинчи дисциплинăна, çунтармалисене перекетлессишĕн кĕрешес ĕçе хавшатасси патне илсе пынă.

Хăшпĕр хуçалăхсенче те (уйрăмăнах суту-илӳпе строителства организацисенче) шофĕрсен ĕç укçине саккунсăр ӳстернине пула вĕсене пĕр çĕртен тепĕр çĕре астарса кайас киревсĕр йăла пур. Çак йăла автоработниксен хушшинчи йĕркесĕрлĕхпе йухăнулăха ӳстерет, йертсе пыракан работниксен, çавăн пекех шофĕрсен ĕç дисциплинине аркатасси, аварисене ӳстересси, машинăсене тискерле тыткаласа вăхăтчен стройран кăларасси патне илсе пырать.

Кăçалхи 5 уйăх хушшинче автотранспăртра пулнă аварисене илсе пăхсан, çакă курăнать: çӳрев йĕркисене пăснине пула 46 проц., ӳсĕр пуçпа çӳренине пула 13 проц., машинăсен техникăла йусавсăрлăхне пула 7 проц., ытти сăлтавсене пула 34 процент авари пулнă. Асăннă тĕслĕхсенчен, автомобилсене тытса пырас тата çул çинче çӳрес правилăсене шофĕрсем хатĕрлекен шкулсемпе курссенче çителĕксĕр вĕрентнине курма пулать.

Тепĕр йенчен шофĕрсем ыйтнине те аван пурнăçлама кирлĕ: çулйĕр органĕсемпе хула совечĕсем урамсене, кĕперсене тата çулсене тирпейлĕ тытассипе сахал интересленеççĕ. Нумай вырăнсенче асăрхаттару паллисем кирлĕ çинчех çук.

Ку йенпе республикă столици—Шупашкар та нумайах уйăрăлса тăмасть. Хула совечĕ хăшпĕр урамсем тăрăх автоçӳревсене чарасси çинчен, автомобилсем тăмали вырăнсем çинчен тата мĕнле хăвăртлăхпа çӳремели çинчен сахал мар постановленисем йышăнать пулин те, ĕçĕ никама та курăнмасть. Хулара халиччен те çулйĕр паллисене лартса тухман.

Йулашки вăхăтра ачасене çирĕппе асăрхаса тăманнинĕ пула, виле вĕçленĕвĕпе вĕçленекен темиçе инкек-синкексемех пулкаларĕç. Ачасем автомашинăсем çумне çакăнса пыраççĕ тата машинăсем умне пыра-пыра кĕреççĕ. Ку вăл шкулсенче, пионер организацисенче ачасем хушшинче воспитани ĕçне çителĕксĕр туса пынинчен, çавна пула ачасем чăрсăрланса кайнинчен килет. Комсомол, пионер тата шкул организацисен воспитани ĕçне ӳстермеле, ку ĕçе ачасен ашшĕ-амăшĕсене хутшăнтармала.

Автотранспăртра болљшевикла йĕркелĕх тума, сăтăрла ĕççен йулашкине пĕтерме пирĕн шутпа çаксене туса иртерме кирлĕ:

автоматериалсем кӳрсе килекен организацисен ĕçне тĕпренех лайăхлатса йамала;

çитес çывăх вăхăтрах автотранспăрт валљи лайăх гаражсем, автомобилсене бензин илмели, çумали площадкăсем тумала тата автомашинăсене йусама квалификацилĕ работниксем çителĕклĕ хатĕрлемеле;

шофĕрсене хатĕрлес ĕçе пĕр-пĕр йертсе пыракан органăн аллине памала тата шофĕрсем хатĕрлес ĕçе автомобилсен паркĕ ӳснипе пĕр виçелĕ туса пымала;

ĕç дисциплинине, çӳрев йĕркисене тата машинисемпе усă курас правилăсене пăсакансемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пымала;

çулсене, кĕперсене, урамсене пăхса усрассине вăйлатмала, çулйĕр çинчи сигнал паллисене лартса тухмала;

çӳрев правилисене шофĕрсем çеç мар, пурте пĕлсе тăрса пурнăçласа пымала;

шкул ачисемпе шкул çулне çитмен ачасене валљи кану вырăнĕсем туса памала, вĕсене машинсем çӳрекен урамсенче вылљаса çӳреме чармала.

Çаксене пурнăçлассишĕн автотранспăртри работниксемне пĕтĕм общественнăçăн тăрăшмала.

С. Т. Мижерăв.

Палех художествă училищинче (Иванăвă облаҫĕ) 120 ҫамрăк вĕренеҫҫĕ.
Ӳкерчĕк ҫинче: „Мадрид оборони"— картинă. Училищĕри художник А. Фомин ӳкернĕ. (Союзфото).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăҫ фронтĕнче пăлхавҫăсем, самолетсем вышăлăн пулăшнипе, Арагони провинцийĕн сурҫĕр пайĕнче республикăнсен позицийĕсене хыттăн хĕсĕ пыраҫҫĕ. Анчах республика ҫарĕсем ҫĕрĕн кашни пусăмне калама ҫук хыттăн хӳтĕлеҫҫĕ, вĕсем пăлхавҫăсене пысăк ҫухатусем кӳреҫҫĕ. Малтанах паларса хатĕрленĕ позицийĕсене чакса, республикăнсем пăлхавҫăсене хирĕҫ пит хайăррăн вăрҫаҫҫĕ. Каталони ҫывăхĕнчи Пиреней тăвĕсем патĕнче республика ҫарĕсем анăҫалла атакă туса, пăлхавҫăсене чылай позицисене тытса илнĕ, нумай ҫынсене тыткăна илнĕ.

Леванта фронтĕнче хайăр ҫапăҫусем пыраҫҫĕ. Вильафамес районĕнче пулса иртнĕ ҫапăҫура пăлхавҫăсем, танкĕсемпе самолетсем пулăшнипе, икĕ пункта тытса илнĕ. Республикăнсем, контратака туса, ҫулĕ вырăнсенче пĕрне йышăнă, кунсăр пуҫне пăлхавҫăсене нумайĕшне тыткăна илнĕ. (ТАСС).

Японецсем бомбăсем пăрахнипе вилнисемпе аманнисем

Японецсем йулашки икĕ ерне хушшинче пăрахнă бомбăсене Кантонра (Кăнтăр Китай) мирлĕ халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем 15—20 пин ҫын шутланаҫҫĕ.

Гуандун провинцийĕн пуҫлăхĕ У Де-чен ҫапла каланă: „Японецсем ҫаван пек бомбăсем пăрахни Китай халăхĕн вĕсене хирĕҫ тăрас йĕркине хуҫаймасть, йăлтах урăхла, вăл Японии агрессорĕсене ҫиене тăрăхнине вăйлатать",— тенĕ. (ТАСС).

Чехословакин оборонă фончĕ валли укҫа пухаҫҫĕ

Чехословакире „республикăн оборонă фончĕ" валли укҫа пухма пуҫланăранпа вырçĕ эрне хушшинче 250 мильон ытла чехословаки кронĕ пухăннă.

Иртнĕ кунсенче ҫĕç „Чехословакин оборонă фончĕ" валли укҫа пухас ĕçе организацилес тĕлĕшпе туна комитет. Чехословаки р. 12 ç. тултарнă йубилейĕ йăчĕпе ҫĕршывăн мĕн пур халăхне чĕнÿ янă. Вăл чĕнӳре комитет демократийĕ, ҫĕршыв никама пăхăнма ăр пурăнассине хӳтĕлеме тата „Оборона фончĕ" укҫа хывса ҫĕршывăн оборонă пултарулăхне ҫирĕплетме чĕнет. (ТАСС).

Иккĕмĕш ҫурҫулшăн хаҫат-журнал ҫырăнассине организацилĕн иртерер

Чăваш республикинчи ҫыхăну, союзпичет тата профсоюз работникĕсем хаҫат-журнал сарас плана темиҫе ҫул хушши ĕнтĕ ытлашшипе тултарса пыраҫҫĕ. Чăваш республикинĕ Горький крайĕн тата „Лесная промышленность" издательствин куҫса ҫӳрекен хĕрлĕ йалавĕсене 1936 ҫултанпа хăйĕн аллинче тытса тăрать.

1938 ҫулхи план тăрăх пирĕн 2 580.000 тенкĕлĕх хаҫат-журнал сармала. Ҫак плана тултарас шутпа 1937 ҫулхи ноябер-декабер уйăхĕсенчех ĕнтĕ 1.500 пин тенкĕлĕх сарнă. Ҫапла вара кăҫалхи пĕрремĕш квартал планне 135 процент тултарнă.

Лайăх ĕҫленин тĕслĕхĕсем кашни районрах пур. Малта пыракан колхозсене хаҫат-журнал сарас ĕҫе лайăх йĕркеленĕ. Йетĕрне районĕнчи Тури Ачак колхозĕнче тата Вăрнар районĕнчи Кольцовка колхозĕнче кашни колхозник киле хаҫат ҫыранса илет. Ишек колхозĕнчи (Ишлей р.) почтальон Йакимăв й. темиҫе ҫул хушши ҫав ĕҫре ĕҫлет, кашни киле хаҫат-журнал ҫырса тăрат.

Шупашкар хулинчи почтальон-стахановка Агейĕвă й. „Верховнăй Совет ведамаҫҫĕсене" пĕччен 25 екземплăр сарнă. Ҫыхăну ҫуртĕнчи комсомолецсем Бухрйакова Николайĕвă „Партийное строительство" тата „Спутник агитатора" журналсене сарас тĕлĕшпе пысăк ĕҫ тураҫ. Хаҫат-журнал сарас йĕнĕпе ĕҫлекен обшественнăй уполномоченнăй Овдин й. 1935 ҫултанпа ĕҫлет, вăл тăрăшнипе ҫыхăну кантурĕнчи кашни работникех хаҫат-журнал ҫыранса илет. Кун пек ударниксем хулара татах пур. Йалхуҫалăхĕн коммунистла ăслă шкулĕнче, пединиститутра, Ҫыхăну ҫуртĕнче хаҫат ҫыпăҫтармали витринăсем тунă. Ҫак кунсенчех спирт савăтĕнче те витрина туса пĕтернĕ.

Анчах, ҫитĕнӳсем пур пулсан та, пирĕн ҫак ĕҫри пысăк ҫитменлĕхсем пытарса хăварма йурамасть. Хаҫат-журнал сарас йĕнĕпе ĕҫлекен обшественнăй уполномоченнăйсем пит ҫителĕксĕр-ха. Шупашкарти хăшпĕр учрежденисене уполномоченнăйсем пачах ҫук (Ҫутĕҫ Халăх Комиссариатĕ, хатĕрлев орг низацисем, ертелсем т. ыт.). Хаҫат ҫыпăҫтармали витринăсем тумаҫҫĕ. Почтă уйрăмĕсенче адрес ҫистемине пичетĕн йĕркелесе йанă учоте ҫук, ҫак вăл ҫыхăну ĕçĕнчи ҫатарлă ĕҫсем йулашкине пулса тăрат ĕнтĕ. Вулакансен конференцине пĕртте тенĕ пекех иртермеҫҫĕ.

СССР Союзĕн Ҫыхăну Халăх Комиссариачĕ ҫумĕн и хаҫат-журнал саракан уйрăм хаҫат-журнал сарас йĕнĕпе чи лайăх ĕҫлекенсене валли куҫса ҫӳрекен йалав тунă тата пĕтĕм союзри йалхуҫалăх выставкинче пулма выран уйарат. Хаҫат-журнала масса хушшине сарни, пуринчен ытла сулăлав кампанинче, политикăлă пысăк вырăн йышăнса тăрат. Пĕтĕм Союзри куҫса ҫӳрекен йалава илессишĕн, хамăр влăри йалава хамăртах тытса тăрассишĕн, йалхуҫалăх выставкинче хутшăнма тивĕҫ илессишĕн халех кĕрешме тытăнмала.

Халĕ вăхăтра иккĕмĕш ҫурҫулшăн хаҫат-журналсем ҫыранас ĕҫ пырат. Партипе комсомол тата профсоюз организацисен хаҫат-журнал сарас йĕнĕпе ĕҫлекен обшественнăй уполномоченнăйсене кашни предприйатирех уйăрмала, союзпичет работникĕсен вĕсемпе ĕҫлессине вăйлатмала. Почтă уйрăмĕсен почтальонсем хаҫат-журналсене подписчиксем патне хăçан пырса панине ҫирĕп учот туса пырас пулат. Парти строительстви ыйтăвĕсем тăрăх ҫыракан журналсене, йалхуҫалăх журналĕсене, „Чăваш Коммунĕ", „Лесная промышленность" хаҫатсене тата районри хаҫатсене ытларах сармала.

Й. Осипăв.

Колхоз поҫолакĕ

Казанович йултăш йăчĕпе тăракан колхоз (Ямпольск районĕ, Винница облаҫĕ) 1933 ҫултан 1938 ҫула ҫитиччен колхозниксене валли 46 ҫурт лартнă.
Ӳкерчĕк ҫинче: колхоз поҫолакĕн пĕр пайĕ. (Союзфото).

Шупашкарти Чăваш Тĕп музейĕ

Музей—культурлă пысăк учреждени пулса тăрат. Музей урлă халăхан аваллăх пурнăҫне, унăн историне, ĕлĕк пусмăрта пурăннă халăх капиталистсемпе помещиксене хирĕҫ, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине, халăх ирĕке тухнă халăхăн пурнăҫне, унăн ӳсĕмĕсемпе пултарулăхне, ҫĕршывăн пуйанлăхне вĕсем ҫинчен тата ытти те нумай пĕлме пулат. Музей ӳсесине халăх йиланса ҫитнине ҫак фактсем те кăтартаҫҫĕ: кăҫалхи пилĕк уйăх хушшинче Чăваш Тĕп музейне 4.08 ҫын пырса курнă. Вăл шутран йалти колхозниксемпе колхозницăсем 3000 ҫынна йахăн.

Куҫăр пуҫне, пирĕн Чăваш Тĕп музейне ытти республикăсенчен те курма чылай килеҫҫĕ.

Чăваш Тĕп музейĕнче хаклă экспонатсем чылай. Вĕсем тăрăх чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пусмăрлă пурнăҫне, хальхи пуйан тата савăнăҫлă пурнăҫне тата республика хуҫалăхĕ кунран-кун ӳсĕ пынине аван курма пулат.

Ака музейра Кольцовкари Сталин йăчĕпе тăракан колхоз ҫуртĕпĕрсен експонатĕ колхоз пурнăҫе тĕреклĕнесе пынине аванах кăтартат. Музей ун пек экспонатсем кăҫал тата икĕ колхозран илсе килет.

Анчах пирĕн музейĕн йĕркелессишĕн, ăна интереслă экспонатсемпе пуйанлатассишĕн кулленех тăрăшса ĕҫлекенсем сахал-ха. Музей ҫурчĕ пите йапăх. Унăн шал йенчи ҫтенисен штукатурки хăпăна-хăпăна пĕтнĕ, нӳрĕ, сивĕ. Ҫав нӳрĕ ҫыхлаша пулах ĕнтĕ музейра хаклă йапаласем (експонатсем) кăвакареҫҫĕ, ҫĕреҫҫĕ. Музей ҫурчĕ пĕчĕкке пиркийех хаклă йапаласем складсенче усăсăр выртаҫҫĕ. Музей ҫуртне тул йенчен пăхсан та питĕ килĕшӳсĕр. Ҫтена кĕтессисем катăла-катăла пĕтнĕ. Музейра йĕркелес тĕлĕшпе Чăваш республикинчи Ҫутĕҫ Халăх Комиссариачĕ аса та илмест, унпа интересленмест пулмала. Музей работникĕсем музей ĕçне лайăхлатас ыйтупа Ҫутĕҫ Халăх Комиссариатĕнче темиçе хутчен те пулнă. Апла пулин те музейăн ĕҫре пулăшу пани ҫук-ха. Ҫутĕҫ Халăх Комиссарĕ Осипăв йултăш кăҫалхи апрелĕн 4-мĕшĕнче музей валли ҫĕнĕ ҫурт лартас тĕлĕшпе ĕҫлеме пилĕк ҫынтан комиссий уйăрат. Комиссийĕн хăй пĕхса тухнă материала апрелĕн 16-мĕшĕнче Ҫутĕҫ Халăх Комиссариатне тăратмала пулнă. Унтанпа ĕнтĕ икĕ уйăх та ҫитет. Анчах комиссийĕ председателĕ, Ҫутĕҫ Халăх Комиссариатĕнче ĕҫлекен Иванов й. „халĕ вăхăт ҫук-ха" тесе, пайан кунчен те ĕҫе тытăнман.

Чăваш музейĕн директорĕ Орлов йултăш каланă тăрăх, Ҫутĕҫ Халăх Комиссариачĕ музей валли укҫа-тенкĕ те сахал уйăрни курăнат. Кăҫал музей ҫуртне йусама 10 пин тенкĕ укҫа уйăрса панă. Вăл укҫа-тенкĕ музейра кăмака сем пусаттарма кăна ҫитет, ҫурчĕн корпусне йусама йулмаст те.

Ҫутĕҫ Халăх Комиссариачĕ ҫумĕнче музей йĕркипе ĕҫлекен инструктор пулмала, анчах вăл пайăн кунта та ҫук-ха. Тата музейра инвентаризаци музей усăлла ҫулранпа та туман.

Музей ĕҫĕпе хула совечĕ те интересленмест. Тивĕҫлĕ органсем музей ҫине малашне те халĕхи пекех пăхсан, паллах, музей ĕҫĕ малала кайма пултараймаст. Халăх ыйтнине тата парăймаст. Ҫак ҫитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе Ҫутĕҫ Халăх Комиссариачĕн тата ытти тивĕҫлĕ органсен те интересленмелĕ.

А. Николаĕв.

Районти ҫамрăксен ăслă вăййине хатĕрленеҫҫĕ

ПСЛКС Тăвай райкомĕ пуҫарнипе июнĕн 19-мĕшĕнче Сăкатпуҫ вăрманĕ патĕнче ҫамрăксен ăслă вăййи пулат. Вăйăра ҫамрăксен пурнăҫе ҫинчен, тата РСФСР-пе ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем ҫинчен докладсем пулаҫҫĕ.

Вăйăра 4 балалайкăран, 2 гитăран, 1 мандолинăран тата пĕр скрипкăран тăракан хĕлĕхлĕ оркестр пулат. Хальт вăл оркестăр 13 кĕвĕ вĕренсе хатĕрленнĕ.

Сăкатпуҫ, Терше, Пушкил тата ытти комсомол организацисем хорпа йурласа пама ҫĕнĕ йурăсем вĕренеҫҫĕ.

Тĕпелăнчи комсомол организаци волейболла выляма хатĕрленет.

ПСЛКС райкомĕ вăййа йертсе пыма Йегор Михайлăв комсомолеца уйăрнă.

Б. Илйин.

„Хулăн тирлĕ" бухгалтĕрсем

Вăрман хатĕрлев планне пурнăҫлас тесе, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тури—Вылăри Сталин йăчĕпе тăракан колхозри колхозниксем кăҫал пит тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ. Ҫулталăкри хатĕрлев планне ытлашшипе тултарчĕҫ. Анчах туртăрнăшăн та, хатĕрленĕшĕн те пайан кунчченех укҫа илеймен-ха.

Мĕнле сăлтавпа унашкал пулнă-ха? Ҫĕмĕрлери механизацилĕ вăрман пункчĕн Саланчăкри участкинче колхозниксен ыйтăвĕсене татса парассишĕн тăрăшмаҫҫĕ.

Бригадир Иван Филимонăв десятникрен ĕҫе тунă ҫинчен илнĕ квитанцийĕн Пулăв бухгалтĕре пана, вăл ăна тӳрех чĕрнĕ те такнă, „Кунна епĕр укҫа памастпăр", тесе ответленĕ. Тепĕр бригадир та ҫакăн пекех, хăйĕн алăнче 2—3 квитанци тытса ҫӳрет, мĕншĕн тесен Пулăв укҫа илме шутласа памасть, укҫине те памаст.

Ф. Катай.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание Бюро Чув. ОК ВЛКСМ к 10-ти часам утра на 17 июня 1938 г. в г. Чебоксары (ул. К. Маркса, дом № 13) для участия в разборе поданных апелляций и заявлений вызываются:
По Яльчикскому району
1. Беляев Варсонофий Г.
2. Алексеев Нестор.
По Ишлейскому району
3. Рыков Порфирий Т.
По Канашскому району
4. Кротов Павел Романович.
По Алатырскому району
5. Белоусов Григ. Никол.
По Траковскому району
6. Николаев Георгий.
По Шемуршинскому району
7. Крылова Глафира Михайловна.
По Чебоксарскому району
8. Андриянов Федр. А.
По Урмарскому району
9. Константинов Алексан. К.
10. Филиппов Аркадий.
По Шумерлинскому району
11. Ильина Пелагея И.
По Мар-Посадскому району
12. Денисов Павел Д.
По Янтиковскому району
13. Краснов Илларион П.
По Шихазановскому району
14. Ермеев Николай.
15. Игнатьев Иван И.
16. Петров Аркадий.
По Вурнарскому району
17. Алексеев Аркадий А.

РК ВЛКСМ должны выслать своих представителей и обеспечить обязательную явку вызванных к указанному сроку.

ОК ВЛКСМ

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР

Студентсен канăвĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Йăвăҫ каскалакан техникумра вĕренекен студентсем июнĕн 12-мĕшĕнчи канмали куна пит савăнăҫлă иртерчĕҫ. Ирхине мĕн пур студентсем духовой оркестрпа Жуковскинчи канмали ҫуртра карĕҫ.

Канмали ҫуртра кун ҫав тери хаваслă иртрĕ. Студентсем вăрманта усă сывлăшра ҫӳрерĕҫ, фото йуратакансем илемлĕ пейзажсене ӳкерсе илчĕҫ. Кăнтăрла тутлă апат ҫинĕ хыҫҫăн тĕрлĕрен вăййăсемпе танаса пучĕҫ, деклямацисем калаҫрĕҫ. Чи лайăх ташлакансемпе вылякансене тата декляматорсене премилерĕҫ.

Студентсем Жуковскинчи канмали ҫуртра кăнтăрла иртсен 5 сехетчен пурăнчĕҫ.

В. Жмакин.

Чăваш халăхĕн кандидачĕсем—кино-екран ҫинче

Историлĕ-документлă фильмсен Шупашкарти киностудийĕ чăваш халăхĕн мухтавлă ывăл-хĕрĕсене—Чăваш АССР тата РСФСР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсене кинопльонкă ҫинĕ ӳкерне. Пĕтĕмпе 10 фильм, кашнийех 30-шăр метр тăршшĕ. Оператăрсем—Глассс тата Гимкин.

Кандидатсем ҫинчен ӳкерне кино-журналсене екрансем ҫинче июнĕн 14-мĕшĕнче кăтартма пуҫлаҫҫĕ.

С. К.

Ҫыхăну уйрăмĕсем сарăлсах пыраҫҫĕ

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май, Шупашкарти Ҫыхăну кантурĕ Шупашкарта виçĕ суйлав округĕнче ҫыхăну агентстввисем уҫрĕ.

Ҫавăн пекех тата июнĕн 9-мĕшĕнче Мильутинри хăма ҫуракан савăтра ҫыхăну уйрăмĕ уҫрĕ. Ҫитес кунсенчех канмали ҫуртра ҫыхăну агентстви уҫат.

Ҫак ҫыхăну агентстввисемпе уйрăмĕсем посылкăсем, телеграммăсем, переводсем, хаклă ҫырусем, заказлă ҫырусем тата хаҫат-журналсене ҫыранса илмели подписка йышăнаҫҫĕ.

С. Кириллăв.

Учителсем кружокра

Иккĕмĕш кустине кĕрекен шкулсенчи учительсем (Шупашкар р.) уйăхра виçĕ хут кружокра пухăнса ПСК(б)П историне вĕренеҫҫĕ. Халĕ кружокра вĕренсе XI-мĕш тĕмăна ҫитнĕ те ĕнтĕ. ПСК(б)П ҫурнашĕн пропагандисĕ Иванов йултăш занятисене тĕплĕн хатĕрленсе пырса, лайăх иртерет. Кружокра учителсенчен В. Антонăвпа Михайлăв пĕр ҫиктермесĕр ҫӳреҫҫĕ, тăрăшса вĕренеҫҫĕ.

Серебрйаков—Ошмань.

Константин Андрейĕвич Треньов

(Литературăра ĕҫлеме пуҫлани 40 ҫул тултарна тĕле)

Пирĕн совет театрĕнче Константин Андрейĕвич Треньов аста художник, талантлă та ăслă тата хăйĕн ĕҫĕпе мухтавлă йуратман драматург пулнипе паллă. Вăл ҫырнă „Пугачовщина", „Любовь Яровая", „Жена", „Ясный луч", „Гимназисты", „На берегу Невы" пйесăсем совет драматургинче пысăк вырăн йышăнса тăраҫҫĕ.

Треньован прозăна ҫырнă произведенийĕсем те, драмисем те пĕр тивĕҫне хаклане ҫĕсене автăр халăх чĕлхине витĕр пĕлсе, усă та витĕмлĕ, чăн-чăн литературăла чĕлхепе ҫырнă.

Треньов йултăш вырăссен аслă писателĕпе — Горькипе пĕр вăхăтра ĕҫлеме пуҫланă, ĕҫе йуратса тăвакан вăтă писателсен шутне кĕрет. Вĕсем—литературăн пысăк мастăрĕсем. Чăн-чăн литературăла чĕлхе тулашĕнче пысăк хаклă тивĕҫлĕ литература пулма пултараймаст. Ҫавăнпа та пысăк писателсем хăйсен произведенийĕсене лайăх тăвассишĕн калама ҫук нумай ĕҫлеҫҫĕ. Треньов те ҫапла, хăйĕн кашни произведенийĕсене тĕплĕн тусе ҫитермесĕр нихăçан та вулакансемпе куракансене умне каларамаст. Ăна епĕр унăн калама ҫук паха произведенийĕсем тăрăх курма пултаратпăр. Унăн чĕлхи йака. Сахал сăмахла, анчах тарăн шухăшла пулăвсем пирĕ йапатаҫҫĕ. Чĕлхе пакаллăхĕ, йăвралăхĕ, сăмаллăхĕ Треньовăн сăмах мастăрлăхĕне ҫыхăнса пыраҫҫĕ: унăн геройĕсем кашни хăйĕн чĕлхипе калаҫаҫҫĕ. Унăн драматургийĕн чĕлхи пурне те анланмала тата витĕмлĕ, вырăн-вырăнпа—афорисăмлă.

Йемельйан Пугачов тата унăн йултăшĕсем—Пика казак, Чумаков, Барсуков, пурте вĕсем халăх атаманĕсем, халăх геройĕсем. Вĕсен художествăла сăн-сăпачĕсем аста художник алли витĕр кăмăла каймала ӳкерĕнсе тухнă. Унăн тата Кошкин комиссар, Любовь Йаровайа учительница, Шванăйа матрос, Горностайĕв профессăр, Дуньа сăнлăхĕсем пире пăхан та хумхантараҫҫĕ, вĕсем витĕмлĕ сăнлăхсем.

Ахальтен мар ĕнтĕ 1925 ҫулта ҫырнă „Любовь Яровая" пйесăна пирĕн совет сцени ҫинче халĕ те пысăк анăҫлăхпа лартаҫҫĕ. Вăл нумай вăхăт хушши пыни автăрăн пултарулăхĕнчен килет. Ку пйеса совет классикин паха пйесисен шутĕнче тивĕҫлĕ вырăн йышăнса йулчĕ. Треньов йултăш „На берегу Невы" пйесинче тĕнчери пролетариатăн аслă ҫулпуҫĕн—Ленинăн сăнлăхне кăтартса парса тепĕр пысăк ҫĕнтерӳ турĕ. Вăл хăйĕн йубилейĕ умĕнхи пысăк творчествăлă ĕҫне туса тăрат.

Треньов драмăсем ҫырма пуҫличчен прозăпа ҫырнă. Вăл хăйĕн кирек те мĕнле произведенийĕнче те пурнăҫа тĕрĕс кăтартса пама тăрăшат. Унăн метачĕ—социалсăмлă реалисăм. Чи йăвăр ҫулсенче те, капиталисăм халăх талаччĕсене тискеррĕн пусарса пынă вăхăтра, аслă вырăс халăхĕ ҫинчен, Украинă халăхĕ ҫинчен тата казаксем ҫинчен хавхаланулă произведенисем ҫырнă, халăхăн ташмăнĕсене питленĕ. Вăл 1917 ҫулхи революцийĕ партире тăман большевик пулса кĕтсе илнĕ.

Треньов нумай вĕренмен. Йалти шкултан тухсан окружри училищăна вĕренме кĕнĕ. Кайарахпа вара виçĕ институтран вĕренсе тухнă. Халĕ те вăл пĕрмай вĕренет. Пурнăçран, пирĕн тĕлĕнмеле совет халăхĕнчен вĕренсе пырат, халăхпа тачă ҫыхăнса ĕҫлет. Ҫавăнпа та унăн драмисем халăхăн кăмăлне каймала пулса тухаҫҫĕ.

Литература руководствинче халăх тăшманĕсем ларнă вăхăтра Треньовăн драмăсем ҫырас ĕҫталăхне хакламан, ăна терле майпа хĕсерлĕнĕ, анчах Треньов парăнман. Вăл хăйĕн пултарулăхне ĕҫре кăтартма тăрăшнă. Халăх хăйĕн йуратнă писателĕсене шыва йамасть, вăл Авербахсене, Киршонсене—ҫав бандитсене литературăран кăна мар, совет халăх хушшинчен те илсе пăрахрĕ. Треньов халăхăн йуратнă драматургĕ пулса йулчĕ.

Пирĕн ҫĕршывра ҫĕҫ писателсене анăҫлан ĕҫлеме условисем пур. Совет писателĕсем хăйсен тĕсĕлле те савăнăҫлă вăхăтра пурăннишĕн пĕтĕм тĕнче умĕнче мухтанма пултараҫҫĕ. Пирĕн ҫĕршывра ҫеҫ художниксене, писательсене, артистсене, музыкантсене пысăк чыс парса йуратаҫҫĕ. Ун ҫинчен Треньов драматург 60 ҫул тултарнине тата вăл литературăра ĕҫлеме пуҫланăранпа 40 ҫул ҫитнине чыслани те лайăх каласа парат.

ЕҪ СЫХЛАВĔН

Пĕтĕм Союзри Аслăлăхпа Тĕпчев Институчĕн
Хусанти филиалĕн лабораторийĕ
ШУПАШКАРТАН (К.-Маркса д. № 13) ХУСАНА куҫат. Малала адрес ҫапла: г. Казань, улица Чернышевского д. № 2, Научно-Исследовательский Институт.

Чăвашпромсоюз президиумĕ 1938 ҫулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх
Вăрнар районĕнчи, Анаткассинчи „УДАРНИК" промысла ертелĕ малашне уйрăм ертел
шутланмаст
Претензисем пур пулсан, икĕ ерне хушшинче ликвидкома тăратмала. Адрес: Анаткасси, Вăрнар районĕ, ЧАССР.
Ликвидком.

ЧĂВАШАВТОГУЖТРЕСТ

автомашинă запас пайĕсене, малтан ĕҫре пулнисене—
ЙӲНЕТНĔ ХАКПА СУТАТ
Ҫавнашкалах АМО моторсем (ĕҫе йама хатĕррисем) сутлăх пур
тата ГАЗ моторлă кимĕ (ҫӳреме йурăхлă) сутлăх пур.
Ҫак адресĕпе ыйтмала: г. Чебоксары, Союзная, 4, Автогужтрест.
2—1

Пайан кино-театрта
ҫĕнĕ, илемлĕ, саслă фильм
„Последняя ночь"

Хусанти В. И. Ульйанăв—Ленин йăчĕпе тăракан
Государствă университечĕ
1938—1939 вĕренӳ ҫулĕнче пĕрремĕш курс факультечĕсене
ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ҪИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

1. Физика—математика факультечĕ—сакнашкал специальнăсем: математика, механика, физика, астрономи, геофизика.
2. Геологи—почва—географи факультечĕ, сакнашкал специальнăсем: географи, геологи, почвоведени.
3. Хими факультечĕ,—специальнăсĕ—химика.
4. Биологи факультечĕ, сакнашкал специальнăсем: зоологи тата ботаника.

Университета вĕренме ССР Союзĕн пур гражданĕсене те (арсынсене, хĕрарăмсене) 17 ҫулхисенчен пуçласа 35 ҫулхисем таран, вăтам шкулсенчен (10 ҫул вĕренмелли шкул, рабфак, техникум) вĕренсе тухнисене йе екстернат йĕркипе вăтам шкул пĕтересе аттестат илнисене илессĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен 20-мĕш хушшинче сак предметсем тăрăх пулаçҫĕ: вырăс чĕлхипе (ҫыру сочиненийĕ, грамматика, литература), политграмăта, математикăпа (сăмахла, ҫыру), физикăпа, химипе, пĕр-пĕр ют ҫĕршыв чĕлхипе (англи, нимĕҫ, французя чĕлхисем вĕренме кĕрес текен килнипе тăрăх).

Геологи—почва факультетне географи специальнăсĕпе вĕренме кĕрес текенсен, пурне те, хушса географи предмечĕпе испытани тăвассĕ.

Испытанисене ССР Союзĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Аслă шкулсемпе ĕҫлекен комитет ҫирĕплетнĕ программа тăрăх тăвассĕ.

Университета вĕренме кĕрес текенсен заявленийĕсене июнĕн 20-мĕшĕнчен августăн 1-мĕшĕнчен йышăнаҫҫĕ: заявленисемпе пĕрле сакнашкал документсем кирлĕ: тĕрĕс автобиографи, вăтам шкултан вĕренсе тухнине катартакан аттестат (подлинник) паспорт пĕрле илсе пымала, виçĕ фото-карточка пулмала, кашни ҫине хăйĕн алă пусса учрежденийĕ ҫирĕплетнĕ (сăрт—пусăн, 3Х4 пысăкăш, ӳкерттерне), сар тивĕҫлĕхне кăтартакан справка (военнообязанийĕсен).

Заявленисене сак адреспа йамала:
Казань, ул. Чернышевского, 16, директору Казанского Государственного Университета имени В. И. Ульянова—Ленина.

Вĕренме кĕмелли условисем ҫинчен пуштă урлă пĕлтересĕ, приемочнăй комиссий секретарĕнчен (32-мĕш пӳлĕм) кашни кунах 10 сехетрен 16 сехетчен ыйтса пĕлме пулат.

Дирекци.